Чăваш АССР
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ФЕВРАЛЬ
14
ТУНТИКУН
36 (4849)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсем тĕлне

Пĕтĕм Российйă Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн XVI совыври çывăх кунсенче пулса иртекен IV Çессии РСФСР Аслă Советне суйламали Положени пройектне сÿтсе-йавса çирĕплетмеле, çапла вара калама çук пысăк та паха политикăлă кампани—РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсен пуçламĕшĕ пуçланать.

Российйă Федеративлă Советлă Социалисăмлă Республики—Совет çемйинчи пĕртан республикăсем хушшинче пĕрремĕш вырăнта тăракан республикă. Унăн промышленнăçĕ пĕтĕм Сойуз продукцин виçĕ пайĕнчен икĕ пай ытларах парса тăрать. РСФСР территорийĕ Балтий тинĕсĕ патĕнчен пуçласа Лăпкă океан таран сарăлса выртать, ун çĕрĕсем çинче 105 мĕлйун çын ытла пурăнать.

Совет Сойузĕнче пур национальнăçсем те пĕртан ирĕкпе усă кураççĕ, пур халăхсем те хăватлă тăвăмлă хастарлăхпа ĕçлесе социалисăм тăваççĕ, рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствине çирĕплетеççĕ; вăл государствăра пусмăрлакансем çук, унта çын хăйне туллин чечекленсе сарăлмашкăн кирлĕ пур условисене те илчĕ. Маркс—Енгелс—Ленин—Сталин аслă идейисем, коммунисăм идейисем, хамăр çĕршыври пур халăхсене те пĕрлештерчĕç, пĕр çĕре пĕтĕçтерчĕç.

Аллă ултă çул кайарах 1882 çулта, Маркспа Енгелс: „Российйă Йевропăри революцилĕ йухăмăн малта пыракан отрйачĕ пулса тăрать", тесе çырнă. Маркспа Енгелс çывхарса килекен социалисăмлă революцин паллисене вуншар çулсен тĕтри витĕр курса тăнă. Марксисăмăн никĕсне хывакансем пророкла каласа панине Ленин—Сталин партийĕ пурнăçа кĕртрĕ.

Аслă вырăс халăхĕ чи малтан пуçласа коммунисăмăн çĕнтерÿлĕ йалавне çĕклерĕ, пĕтĕм тĕнчери пусмăрта пурăнакансене çĕнтерÿ çулне кăтартса пачĕ.

Паллах ĕнтĕ, совет çĕршывĕнче пурнакан пĕтĕм нацисен çемйинче вырăс халăхне хытă йуратаççĕ.

1914 çулта, ирĕклĕхпе тăван çĕршыв çинчен икĕпитлĕн калаçакан буржуалă çыруççене хирĕç ответлесе, Ленин çапла çырнă:

„Пирĕншĕн, ăнланулă великорусс çук! Епĕр хамăр чĕлхене тăван пролетарийĕсемшĕн, нацилĕ мухтану туйăмĕ йут-им вара? Паллах, çĕршыва йуратапăр, унăн ĕççынни массисене (урăхла каласан унăн халăхĕн вунă пайĕнчен тăхăр пайне) демократсемпе социалиссен ăнланулă пурнăçĕ таран çĕклесе хăпартас тĕлĕшпе епĕр нимĕнрен те ытларах ĕçлетпĕр. Патша палачĕсем, улпутсем тата капиталиссем хамăрăн калама çук чаплă çĕршыва мĕнтери пусмăрланине, хĕсĕрленине тата мăшкăланине курма, туйма пире нимĕнрен те ытларах ыраттарать. Вăл пусмăрсем пирĕн хушăран, великоруссен хушшинчен отпор парассине кăларнипе, вăл тавралăх Радищева, декабриссене тата 70 çулсенчи революционер-разночинецсене кăларнипе, 1905 çулта великорусс рабочийĕ массăсен революцилĕ хăватлă партине туса хунипе, çав вăхăтрах великорусс мужикĕ демократ пулма пуçланипе, вăл пуппа çĕр улпутне тытса сирпĕтме пуçланипе епĕр мухтанатпăр".

Хăйĕн пин çуллă историйĕ тăрăшĕнче аслă вырăс халăхĕ хăй хушшинчен нумай чаплă талантсем кăларчĕ. Йевропăпа Ази пĕр пĕринпе тĕкĕнсе тăнă вырăнта вырнаçса тăрса хĕвеланăçĕнчи тата хĕвелтухăçĕнчи тискер кайăксенчен сыхланса тăрса, аслă государствă туса пырса, вырăс халăхĕ темиçе хутчен те чаплă паттăрлăхпа хăйулăх тĕслĕхĕсене кăтартрĕ. Вырăс литератури, науки, искусстви тĕнчене йалтăраса тăракан чаплă йатсем чылай пачĕç.

Вырăс культурин аслăран та аслă палăрăмĕ—ленинисăм, вăл пĕтĕм пусмăрти етемлĕхе çул кăтартса пыракан çăлтăр, шанчăк пулса тăнă. Епĕр ленинисăмăн хавхаланулă ĕçĕсене тăвакансемпе—Ленинпа, Сталинпа саккунлă мухтанатпăр.

РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсем çывхарса килеççĕ. Вырăс халăхĕ, РСФСР территорийĕ çинче пурăнакан ытти халăхсемпе пĕрле, ĕлĕк патша стройĕ вăхăтĕнче пусмăр тÿссе пурăннă халăхсемпе пĕрле, чи лайăх çынсене суйласа вĕсене республикă влаçĕн аслă органне йарĕ.

РСФСР Аслă Советне суйламали Положени пĕтĕмпех Сталинла Конституцирен—тĕнчери демократилĕ Конституцирен тухса тăрать. ССР Сойузĕн Сталинла Конституцийĕ—пирĕн тăван çĕршывăн тĕп саккунĕ, совет государственнăçĕн тимĕр никĕсĕ. ССРС Аслă Совечĕн суйлавĕсем совет халăхĕ моральпа политика тĕлĕшĕнчен пĕрлĕхĕ пулнине, вăл коммунисăм идейсене вĕçĕ-хĕррисĕр хисепе хунине, вăл Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕçсе чăмăртанса тăнине, хăйĕн тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине кăтартса пачĕ. ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ—политикăлă кампани—пĕтĕм тĕнче умĕнче совет граждăнĕсен политикăлă активлăхĕпе ăнланулăхĕ пит çÿлте тăнине кăтартса пачĕ. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 90 мĕлйун суйлавçă хăйсен сассисене пачĕç. Совет çĕршывĕн правителствине ырланă пек пĕтĕм халăх пĕр çын пек пулса ырланă правителствă тĕнчере урăх çук, нихăçан та пулман. Российйă Федераци влаçĕн аслă органĕн суйлавĕсем, ССР Аслă Совечĕн суйлавĕсем пекех, чаплăн иртересси пирки нимĕнле иккĕленÿ те пулма пултараймасть.

Çав тери чаплăн вĕçленнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче пирĕн партипе совет организацийĕсем калама çук пысăк политикăлă опыт туйанчĕç, РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсене иртерне чухне вăл опытпа пĕтĕмĕшпех туллин усă курас пулать. Иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче çав тери ăнăçлăн ĕçленĕ калама çук чаплă агитаторсемпе пропагандиссене ĕçе çĕнĕрен хутшăнтарас пулать. Издателствăсем, кино, радио РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсем тĕлне агитаци материалĕсене хăвăртрах кăларма тăрăшас пулать. Пĕр кун та ахаль çухатма йурамасть.

Сталинла Конституци тăрăх РСФСР Аслă Советне пирвайхи хут суйласси—республикăри парторганизацисемпе совет организацисемшĕн пысăкран та пысăк екзамен пулса тăрать.

Пĕтĕм Российйăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн IV Çессийĕ умĕнче калама çук пысăк та паха задача—РСФСР Аслă Советне суйламали Положенине сÿтсе-йавас тата çирĕплетес задачă тăрать. Пройект никĕсĕнче Сталинла Конституцин демократисăмĕ выртать.

Вырăс халăхĕ хăйĕн чи лайăх ывăлĕсен йунне тăкса ирĕклĕхпе телей кĕрешсе илнĕ. Ун пурнăçĕн ăраскалĕ, ун тăван çĕршывĕн ăраскалĕ ĕмĕрлĕхех социалисăмла аслă революципе, социалисăмпа çыхăннă. Социалисăмсăр, совет стройĕсĕр халăх телейĕ çук, пулма та пултараймасть.

Большевикла пиçĕхсе çирĕпленнĕ хамăр çĕршыв ытти халăхсемпе çирĕп пĕрлешĕннĕ аслă паттăр халăх, Сталинла Конституци йалавĕпе РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсене хатĕрленсе, граждăн тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртессинче чаплă тĕслĕхсем кăтартса парĕ. Хăйсен пайанхи калама çук лайăх пурнăçне тата та ытларах чаплă пулас малашлăхне тăвас ĕçре Российйă Федерацинчи, тата пĕтĕм Сойузри халăхсене чăрмантарма пултаракан вăй çук. Ытти тăванлă сойузлă республикăсемпе пĕрле РСФСР пĕр пăркаланмасăр тата çĕнтерÿлĕн коммунисăм патнелле пырать.

(„Правда" умстатйи)

Германи çарĕнчи хумханусем

Варшавăран пĕлтернĕ тăрăх, Польшăри хаçатсем Германи çарĕнче йулашки „тасату" хыççăн сиксе-сике тухнă пăлханусем çинчен пит нумай пĕлтерÿсем пичетлесе кăлараççĕ. Германин аслă офицерĕсенчен 23 çын Австрине тата 30 офицерĕ Швейцарине тарнă. Германин Польшă чикки çывăхĕнче вырнаçса тăракан икĕ çар гарнизонĕнче пăлхав сиксе тунă.

Хаçатсем тата Германире „рейхсверăн агрессивлă офицерĕсене" массăлăн арĕслени çинчен, Германин кронпринцĕ пулнăскер урăх çĕршыва тухса тарни çинчен пĕлтереççĕ. Вăл çын Германире монархилĕ переворот хатĕрленĕ пулать.

Çак пĕтĕм сведĕнисене хаçатсенчен нумайăшĕсем, Германири шалти политикăлă кризис малашне те йăвăррăн çивĕчленсе пынине кăтартса парать, тесе хакласçĕ.

Папанинцăсен геройла ушкăнне куçса çÿрекен пăр çинчен антарнă тĕле.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сулахайран сылтăмала— куçса çÿрекен станцин начальникĕ И. Д. Папанин, радист Е. Т. Кренкель, магнитолог-астроном Е. К. Федоров, гитролог тата гитробиолог П. П. Ширшов. (Сойузфото).

Папанинцăсем „Таймыр" прожектăрĕн çутине курнă

„ТАЙМЫР" БОРЧĔ, 12-II, 18 сехет те 45 минут (радио тăрăх). Пирĕн координатсем—çурçĕр широтин 71 градус та 38 минучĕ, хĕвеланăç долготин 17 градус та 20 минучĕ. Уйар. Гренланди çыранĕсене, Томпсон сăмсахне куратпăр. Пайан 12 сехет те 30 минутра Кренкельпе калаçрăмăр. Вăл пире: ирхине 6 сехетре сирĕн прожекторăн çутине лайăх куртăмăр, хăш тĕлтен курнине паллă туса хутăмăр, терĕ. Унтан вăл прожектор çутине хăш тĕлте курнине пĕлтерчĕ. Вĕсем хăш тĕлтен çута курни епĕр пыракан вырăнпа тĕлĕх килчĕ.

Хулăн пăр хушшипе пыратпăр,—пăрĕ вакки те, пысăк татăксемли те пур, вĕсене хаяль шăннă пăр çыпăçтарса тăрать. Папанин ушкăнĕн пăрĕ патне çывхартăмăр, тесе шутлатпăр. Çурçĕр-хĕвеланăç йенчен 3 баллă çил вĕрет. Сывлăшра—сивĕ 26 градус.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ

Остальцев.

„Таймыр" çинчи самолотсене вĕçме хатĕрлеççĕ

„ТАЙМЫР" БОРЧĔ, 12-II. (Радио тăрăх). Пирĕншĕн пит савăнăçлă вăхăт çитсе тăчĕ. Вайлă çилтăвăл тăнă, нимĕн те курăнман хыççăн, халь ĕнтĕ пирĕн тĕлте тÿпере таса пĕлĕт, çăлтăрсем куранаççĕ. „Таймыр" çинче тăрсах малала кайать. Вăл темиçе çулхи 8 баллă пăрăн шултра татăкĕсем хушшипе пырать. Папанин ушкăнĕн пăрĕ патне çитес хушă чаксах пырать.

Папанинцăсемпе черетлĕ калаçу лайăх иртрĕ. Епĕр микрофон тăрăх Пысăк Çĕр çинчи çĕне хыпарсене каласа патăмăр.

Кренкель савăнтарчĕ: Папанин лагерĕнчен икĕ километрта çăмăл самолотсене анса ларма тата вĕçсе хăпарма йурăхлă пăр пур; пăрĕн тăршшĕ 420 метр, сарлакĕшĕ 250 метр.

Експедицири самолотсене хатĕрлеме приказ панă.

Хальхи вăхăтра експедицири çынсем пурте карап çумне шăннă пăра катса тасатаççĕ.

„Таймыр" çинчи експедици руководителĕ

Остальцев.

Папанин лагерĕ тĕлĕнчен хĕвел курăнать

Папанин ушкăнĕ вырнаçнă пăр куçса пынă районра виçĕ уйăх хушши ытла сĕм çĕрле тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ „Çурçĕр полюсĕ" станци тĕлĕнчен хĕвел курăнать. Вăл районра 5 сехете йахăн хĕвел анмасăр тăрать. Унсăр пуçне, ирхине тата каçхине çутă пулать.

„Çурçĕр полюсĕ" кăнтăр йеннеле куçса пынă май, Папанин лагерĕ районĕнче кун талăкра çур сехете йахăн хушăнса пырать.

(ТАСС).

Папанин пăрĕ патне

Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управленин сведенийĕсем тăрăх, „Мурман" пĕрçĕмĕрен февралĕн 12-мĕшĕнче 15 сехетре хĕвеланăç йеннеле, сехетре 12 узел хăвăртлăхпа ишсе пынă. Вăл вăхăтра „Мурман" çурçĕр широтин 71 градусĕпе 48 минутинче, хĕвеланăç долготин 3 градусĕпе 04 минутинче пулнă.

„Мурман" çинчи експедици çынвисем,—тесе пĕлтерет „Мурман" капитанĕ Котцов йулташ,—пăр хĕрри патне çывхарасса тÿсме çук кĕтеççĕ. Пăр çинче пуçланас разведкă вальли борт-механик трÿмра самолот хатĕрлет.

* * *

Февралĕн 12-мĕшĕнче ирхине 7 сехетре „Мурманец" çурçĕр широтин 69 градусĕпе 24 минутинче, хĕвеланăç долготин 19 градусĕпе 18 минутинче пулнă. „Мурманец" пыракан районта—çанталăк лăпкă, талкăшпех тĕтрелĕ, 5 градус сивĕ.

* * *

„Йермак" пăрçĕмĕрен февралĕн 12-мĕшĕнче Гогланд утравĕ (Финский залив) çывăхĕнче пулнă.

„Çурçĕр полюсĕ" станцинче

Çурçĕр çулĕсен Тĕп Тытăмĕ пĕлнĕ тăрăх, февралĕн 12-мĕшĕнче 12 сехет те 30 минутра „Çурçĕр полюсĕ" станцин координачĕсем çапла пулнă: çурçĕр широтин 71 градус та 37 минучĕ, хĕвеланăç долготин 20 градус та 10 минучĕ.

(ТАСС).

Естони пограничникĕсем совет территорийĕ çине каçса кĕни

Кăçалхи февралĕн 8-мĕшĕнче Естонин виçĕ пограничникĕ, совет чикки урлă каçса, пирĕн „Ударный труд" колхозри пулăçсен ертелĕ патне çывхарнă, пирĕн пулăçсене вайпах хăйсен аллине çавăрса илме пикенсе, вĕсем çине пăшалсемпе пеме тытăннă. Пирĕн пулăçсем Чудской йатлă кÿлĕре, чикĕ линийĕнчен 500 метр шалта, ССР Сойузĕн екваторийĕ (территорилĕ шывĕ) çинче пулă тытнă пулнă. Пулăçсене пулăшма пырса çитнĕ пирĕн пограничниксен нарйачĕ сине те вĕсем пăшалсенчен пенĕ. Хирĕç-хирĕç персе тăнă хыççăн Естонин виçĕ пограничникĕ, тата вĕсен пулнă лаши те, вилнĕ. ССР Сойузĕн Естонири полпречĕ Естони пограничникĕсем совет территорийĕ çине хĕçпăшалланса каçса кĕннине тата пулăçсемпе вĕсен пулă тытмали ĕçхатĕрĕсене туртса илме пикеннине хирĕç таталăн протес тунă.

(ТАСС).

Хăйулă сывлăш вĕçевçисене пытарни

„СССР В-6" дирижабле катастрофă пулнă чух вилнĕ хăйулă сывлăш вĕçевçисен—Гудованцев, Паньков, Демин, Льдангузов, Кулагин, Ритсланд, Миачков, Коньашин, Шмельков, Никитин, Кондрашев, Чернов, Градус йулташсен кĕлĕсене хунă урнăсене февралĕн 12-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Сойузсен Çурчĕн Колоннăлă залĕнче вырнаçтарса ларгнă. Йĕри-тавра симĕс пальмăсем, йешĕл чечексем лартса тухнă çÿлĕ постамент умĕнче чечек çыххисем нумай.

Вилнисемпе йулашки хут уйăрăлмашкăн Мускаври предприйатисенчи рабочисен нумай делегацийĕсем, стахановецсем, учонайсем, летчиксем, командирсем, инженерсем, красноармейецсем, студентсем пухăннă.

Хисеплĕ хурал пĕр шавсăр улшăнать. Хисеплĕ хуралра улшăнаулшăна тăраççĕ: ПССЛКС Тĕпкомĕн секретарĕ Косарев йулташ, Граждăнла сывлăш флочĕн Тĕп Управлени начальникĕ Молоков йулташ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн сывлăш-çар вăйĕсен начальникĕ комкор Локтионов йулташ, Совет Сойузĕн Геройĕсем Смушкевич, Спирин, Алексейев, Слепнев йулташсем, „СССР В-6" дирижаблĕн йулашки вĕçевĕнче пулнă Бурмакин, Почекин, Воробйов, Устинович йулташсем, летчиксем, вилнисен йулташĕсемпе çывăх çыннисем.

Кăнтăрла 3 сехетре урнăсене Колоннăлă залран илсе тухаççĕ. Мускаври 50 пин ытла ĕççыннисем траурлă процессипе пĕрле Ново-Девичийе масарĕ патне пырса çитнĕ. Траурлă митинг уçăлать. Граждăнла авиацинчи работниксен йачĕпе Граждăнла сывлăш флочĕн Тĕп Управлени начальникĕ Совет Сойузĕн Геройĕ В. С. Молоков йулташ тухса калать.

— Пайан епĕр социалисăмлă тăван çĕршывăмăрăн вунвиçĕ ывăлне пытаратпăр,—тет вăл.—Хăйулă сывлăш вĕçевçисен йачĕсене çĕршывăмăр нихăçан та манас çук.

Вилнĕ йулташсен йачĕсем умĕнче епĕр пуçăмăрсене тайатпăр тата вĕсен масарĕ çинче — вĕсем кĕрешнĕ, вĕсем хăйсен çамрăк пурнăçĕсене панă ĕçе малала туса пырассишĕн, ăна аталантарса çĕклентерсе пырассишĕн пĕтĕм вăйа хурăпăр, тесе сăмах паратпăр. Вĕсен масарĕ çинче епĕр çавăн пекех тата хамăр тăван çĕршывăмăршăн тата хамăр партишĕн вĕсем пекех тÿрĕ кăмăлпа чĕререн йуратса ĕçлĕпĕр, кирлĕ пулсан совет çĕршывĕн ырлăхĕшĕн хамăр пурнăçăмăрсене те парăпăр, тесе сăмах паратпăр.

Ĕмĕр асра пулĕç вилнĕ сывлăш вĕçевçисем!

Траурлă митинг хупăнать. „Интернационал" кĕвви илтĕнет, вилнĕ сывлăш вĕçевçисен кĕлĕсене хунă урнăсене Ново-Девичийе масар стенисен ăшне вырнаçтарса хураççĕ. Халахăн тÿрĕ ывăлĕсене числаса виçĕ хутчен пăшал сальучĕ йанраса кайать.

(ТАСС).

ПСК(б)П Мускав Облаç Комитечĕн пленумĕ

Февралĕн 10-мĕшĕнче ПСК(б)П Мускав Облаç Комитечĕн Пленумĕ пулса иртнĕ.

Н. С. ХРУШЧЕВ йулташа УК(б)П Тĕпкомĕн пĕрремĕш секретарĕн ĕçĕсене туса пыма суйланă пирки, Пленум ăна ПСК(б)П Мускав Комитечĕн секретарĕн ĕçĕнчен хăтарнă.

ПСК(б)П Мускав Комитечĕн пĕрремĕш секретарĕн ĕçĕсене туса пыма Пленум А. И. УГАРОВ йулташа суйланă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Кăнтăрти фронтра, Гренадă секторĕнче пăлхавçăсем йулашки кунсенче Пенон де ла Мата патĕнче (Пенон де ла Мата вăл стратеги йенчен пысăк вырăн йышăнать, нумайăх пулмасть ăна республиканецсем тытса илнĕ) республикă çарĕсем çине атакăлама хăтланнă. Ку участкăра пăлхавçăсем пысăк çухатусем тăваççĕ. Республиканецсем марокканецсен икĕ табор чухлĕ çарне йăлтах аркатса тăкнă. Пăлхавçăсен командованийĕ вĕсене çухатнă позицисене кайала туртса илес шутпа илсе пынă пулнă.

Пăлхавçăсен лагерĕнчен тарса тухнисем ĕнентернĕ тăрăх, Гренадă секторĕнче пысăк çухатусем тунă пирки пăлхавçăсен çарĕсенчĕ йĕрке пăсăлса кайнă. Пăлхавçăсен лагерĕсенчен тарса тухнисем каласа панă тăрăх, çав участкăра çарсене йертсе пынă темиçе офицера персе пăрахнă.

Университет хулин секторĕнче (Центрти фронт) республикă çарĕсем минă сиктерсе йанă. Вăл минăна йалхуçалăх шкулĕн çурчĕ айне лартнă пулнă.

Минă сиксе çурăлса кайнипе шкул çурчĕ ишĕлнĕ тата ун çывăхĕнчи пăлхавçăсен укреплениййĕсене çĕмĕрнĕ.

(ТАСС).

Çакна вара Румынире „следстви" теççĕ

ВЕНА, февралĕн 10-ш. (ТАСС). Совет Сойузĕн Румынири ĕçĕсен поверенннăйĕ Бутенко йулташ çухалнăранпа виçĕ кун иртнĕ пулсан та, Румыни влаçĕсем пуçласа йанă следстви нимĕнле результат та паман-ха. Румыни пичечĕ следствине арпаштарса йарас тата йĕрсене çухатас тесе, хăй мĕн тума пултарнине йăлтах туса пынине шута илсессĕн, следстви нимĕн усă та паманнинчен тĕлĕнмели те çук. Следствине арпаштарас, йĕрсене çухатса йарас шутпа „хăй ирĕкĕпе çухални" „хăйне хăй вăрлани" т. ыт. çинчен тĕрлĕрен суйă хыпарсем сараççĕ. Çакăн пек шухăшпах ĕнтĕ хаçатсем суйă фото-ÿкерчĕксем пичетлесе кăлараççĕ. Бутенко йулташ сăнĕ вырăнне полпредствăри ытти сотрудниксен сăнĕсене пичетлеççĕ. Кунта çакă к рăнса тăрать: çак пĕтĕм ĕççене çул кăтартса илсе пыраканĕ—преступлени тунă çĕре хутшăннă опытла ал; çав вăхăтрах Румынин официалă влаçĕсем нимĕскер те тумаççĕ. Дипломатсемпе журналиссем хушшинче, вăл преступленийе „тимĕр гварди" йе „ланчийерсем" текен ушкăн, йе урăхла каласан правителствă членĕ Куза çумĕнче тăракан организаци тунă, вăл преступленийе Германи фашисĕсен пулăшувĕсĕр мар тунă, тесе пĕр иккеленмесĕрех калаççĕ.

ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1938 ҫулти февралӗн 5-мӗшӗнче ҫирӗплетнӗ

Машинӑ-трактор станцисене государствӑ бӳджечӗ тӑрӑх укҫа-тенкӗ парса тӑмали

ПОЛОЖЕНИ

1. Машинӑ-трактор станцисен пӗтӗм расхочӗсене ваљљи укҫа-тенкӗне пӗтӗмпех государствӑн союзлӑ бӳджетӗнчен парса тӑраҫҫӗ.

2. МТС-не мӗн чухлӗ укҫа-тенкӗ парассине ҫакӑн пек расходсене кӗртсе шутласа кӑлараҫҫӗ:

а) производствӑ расхочӗсем (горӳчи тата сӗрмели материалсем, машинсемпе тата механизмсемпе ӗҫлекенсене тӳлемели ӗҫукҫи, машинӑсемпе ӗҫхатӗрӗсене, ҫурт-йӗрсемпе оборудованийе тӗрӗслен тата юсамалли йусасси);

б) горӳчин, йусанӑ чухне кирлӗ запаслӑ пайсемпе ытти материалсен тепӗр ҫулталӑка йусакан запасне туса хурасси;

в) капитал хывасси (пур тӗрлӗ машинсемпе инвентарсене туйанасси, строителствӑ тата оборудовани);

г) агрономсене, инженерла-техникла тата административлӑ ӗҫ тӑвакансене тытса тӑрасси (ӗҫукҫи тата ӗҫукҫинчен шутласа илнисем) тата ытти административлӑ-управлени расхочӗсемпе пӗтӗм хуҫалӑхлӑ расходсем.

Асӑрхаттарни: МТС-не тытса тӑма тухакан расходсен хисепне, ҫавӑн пекех тата — МТС ҫумӗнчи агрономи—хими лабораторисене, горӳчине сӑнакан лабораторисене, нумай тиражлӑ хаҫатсене, ача-пӑча сачӗсемпе площадкисене тытса тӑма тухакан расходсене те кӗртеҫҫӗ.

3. МТС-сене укҫа-тенкӗ парассине сметӑ тӑрӑх туса пыраҫҫӗ,— сметӑсене, республикӑсен ҫӗрӗҫ халах комиссариачӗсем, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем МТС-сене ҫулталӑкласа панӑ производствӑ виҫисемпе укҫа-тенкӗ памали лимитсем тӑрах тӑваҫҫӗ. Вӗсем МТС-сене производствӑ виҫисемпе лимитсене хӑйсене ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ панӑ виҫесемпе лимитсене хисепре тытса параҫҫӗ.

Республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсем, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем ҫав виҫесемпе лимитсем чухлӗ уйрӑм МТС-сен ҫулталӑклӑх сметисене ҫирӗплетеҫҫӗ. Сметӑсене ҫуршар ҫулталӑклӑха уйӑрса тӑваҫҫӗ тата ҫирӗплетеҫҫӗ.

4. Республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсем, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем, МТС-сен ҫулталӑклӑх сметисем тӑрӑх, ҫурҫулталӑклӑха укҫа-тенкӗ памали лимитсене тӑваҫҫӗ, ҫавсене республикӑсен финанс халӑх комиссариачӗсемпе, край (облӑҫ) финанс пайӗсемпе килӗштереҫҫӗ, вӗсем ҫав лимитсене бӳджетран укҫа-тенкӗ куҫарма ССРС Финанс Халӑх Комиссариатне пӗлтереҫҫӗ.

Республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсен, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсен ҫурҫулталӑклӑха панӑ укҫа-тенке МТС-сене валеҫсе панӑ чухне хӑйсен аллинче маневӑрлӑ валеҫмен фонд — республике йе облӑҫе панӑ ҫав укҫа-тенкӗрен 3% таран — хӑварма права пур,— ӑна вӗсем ҫаксене ваљљи тӑваҫҫӗ.

а) кӑтартса панӑ ӗҫсен планне пӗтӗмпех тултарнӑ МТС-сене. памали укҫа-тенке пӗтӗмпех тата вӑхӑтра пама;

б) кӑтартса панӑ ӗҫсен планне ирттерсе тултарнӑ МТС-сене укҫа-тенкӗ хушса пама,— вӗсене кӑтартса панӑ ӗҫсен планне тултарман МТС-сене парас укҫа-тенкӗрен хушса параҫҫӗ.

5. МТС-сене укҫа-тенкӗ парас ӗҫе Государствӑ банкӗ урлӑ туса пыраҫҫӗ.

Кашни тӗрлӗ расхода ваљљи: горӳчи илме, машинсене йусама, машинсемпе тата механизмсемпе ӗҫлекен рабочисене ӗҫукҫи тӳлеме, МТС аппаратне ӗҫукҫи тӳлеме, административлӑ-хуҫалӑхлӑ ытти расходсем ваљљи—йатарласа бӳджетӑн уйрӑм счетне уҫаҫҫӗ.

Государствӑ банкӗн отделенийӗсем укҫа-тенке ҫирӗплетнӗ сметӑри виҫесем чухлӗ тӳрех бӳджет счечӗсем ҫинчен ҫак йӗркепе парса тӑраҫҫӗ:

а) МТС рабочисемпе служащисене ӗҫукҫи пама — чек тӑрӑх, ӗҫукҫи памали ведӑмӑҫсене, МТС директорӗ тата аслӑ бухгалтер алӑ пусса тӑратсан;

б) административлӑ - хуҫалӑхлӑ расходсене ваљљи — чек тӑрӑх тата МТС поручениӗсем тӑрӑх;

в) тӗрлӗрен йапаласем туйанма тата МТС-не ваљљи тунӑ ӗҫшӗн тӳлеме—МТС акцептованӑ тунӑ счетсем тӑрӑх тата МТС аккредитив тӑратма панӑ зайавлени тӑрӑх.

6. Бӳджетӑн горӳчи илмели счечӗ ҫинчен ҫак расходсене тӑваҫҫӗ:

а) пур тӗрлӗ горӳчишӗн тата сӗрмели йапаласемшӗн тӳлеме, ку шута тӑрапа (катка-пичке, тавраш-семпе) усӑ курнӑшӑн тӳлемели тата сӗрмелисем илнӗ чухне тарӑшӑн тӳлемели расходсем те кӗреҫҫӗ;

б) трактористсене горӳчи перекетлесе хӑварнӑшӑн тата усӑ курнӑ ҫусене пуҫтарнӑшӑн премӗ тӳлеме,— ҫавна ваљљи укҫа илме МТС директорӗ тата бухгалтер алӑ пуснӑ расчет ведӑмӑҫӗсене тӑратмала;

в) горӳчине тата сӗрмели йапаласене Нефтесбыт склачӗсенчен йе чукунҫул станцисенчен МТС-не кӳрсе килме тухакан расходсене тӳлеме,— ҫавсене тара тытнӑ транспортпа кӳрсе килнӗ пулсан;

г) горӳчине транзитпа илнӗ чухне чукунҫул расхочӗсене тӳлеме.

7. Бӳджетӑн машинсемпе тата механизмсемпе ӗҫлекен рабочисене, МТС служащисене ӗҫукҫи тӳлемели счечӗ ҫинчен ҫак расходсене тӑваҫҫӗ:

а) ӗҫукҫи параҫҫӗ;

б) ӗҫукҫинчен шутласа илекен социаллӑ страховани тӳлевне, ҫавӑн пекех тата ӗҫукҫинчен катса йулакан укҫасене (тупӑш тӑрӑх илекен налог, куљтсбор) куҫараҫҫӗ.

8. Бӳджетӑн ремонт расхочӗсене ваљљи уҫнӑ счечӗ ҫинчен МТС йусав ваљљи йатарласа уҫнӑ счетсем ҫине куҫараҫҫӗ.

9. Бӳджетран паракан укҫа-тенке Государствӑ банкӗ кашни тӗрлӗ ӗҫе туса укҫа-тенкӗ пама палӑртса ҫирӗплетнӗ виҫесене хытӑ пӑхӑнса парать.

10. МТС пӗр-пӗр расход тӑвас ҫӗртен перекетлесе хӑварсан, перекетлесе хӑварнипе ҫав ӗҫех малалла тума МТС хӑйех уса курма пултарать, перекетлесе хӑварнине урӑх ӗҫе ваљљи расхода йарас пулсан — кашни хутрах республикӑ ҫӗрӗҫ халӑх комиссариатӗнчен, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗнчен—республикӑ финанс халӑх комиссариачӗпе, край (облӑҫ) финанс пайӗпе килӗштерсе—ирӗк илмеле, йе йатарласах ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнчен ирӗк илмеле.

11. МТС-сем укҫа-тенкӗ парассине тӗрӗс туса пынине тата панӑ укҫа-тенке кирлӗ ӗҫе йанине тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ: ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсем, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем.

Республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсемпе край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем—бӳджетран панӑ укҫа-тенке расхода тӗрӗс йанине МТС-сен уйӑхри бухгалтери отчочӗсем тӑрӑх тата оперативлӑ отчотсем тӑрӑх, ҫавӑн пекех тата ревизисем туса йе йатарласах тӗрӗслесе контроль туса тӑраҫҫӗ.

12. Укҫа-тенке ытлашши расходланине, финанс дисциплинине пӑснине палӑртсан, республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсен, край, (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсен ҫавӑн пек пӑсӑксене тӳрлетме мӗн кирлине тумала тата айӑплисене ответ тыттармала.

13. Республикӑсен финанс халӑх комиссариачӗсем, край (облӑҫ) финанс пайӗсем, хӑйсене панӑ правасем тӑрӑх, МТС-сен финанс ӗҫӗсене ревизи тӑваҫҫӗ.

14. Государствӑ банкӗн кантурӗсемпе отделенийӗсем МТС-сен сметисем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине вӗсем тӑратакан уйӑхри бухгалтери отчочӗсем тӑрӑх тата ӗҫсене пурнӑҫа кӗртни ҫинчен паракан оперативлӑ отчотсем тӑрӑх тӗрӗслеҫҫӗ. Ҫавӑн чухне Государствӑ банкӗ чӑннипех тунӑ ӗҫсем ҫинчен пӗлтернисем тӑрӑх тӗрӗслет:

а) горӳчи расходлас йенпе йышӑннӑ нормӑсене пӑхӑннине;

б) йаланхи рабочисене ӗҫукҫи тӳлеме тухнӑ расходсем планпа шайлӑ пулнине.

15. Бӳджет счечӗсемсӗр пуҫне, МТС-сен Государствӑ банкӗнче ҫакӑн пек текущи счетсем уҫма права пур:

а) трактористсемпе расчет тумали;

б) директор фончӗ;

в) ытти ӗҫсене ваљљи.

Ытти ӗҫсене ваљљи уҫнӑ текущи счет тӑрӑх МТС-ин планра палӑртман тупӑшсем кӗнине (айакка ӗҫлесе пани, штрафсем т. ыт. те), ҫавӑн пекех тата илнӗ премисене шута илсе пыраҫҫӗ.

Ҫав счет ҫинчи укҫа-тенке МТС директорӗ хӑй расхода йарать.

Бӳджет счечӗсем ҫинчи укҫа-тенке МТС текущи счечӗсем ҫине куҫарма йурамасть.

16. ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ план тӑрӑх, ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ республикӑсемпе крайсенче тата облӑҫсенче МТС-сен капитал хывмали план тӑвать, планра ҫакӑн пек расходсене уйрӑмӑн палӑртать:

а) строителствӑ ваљљи, оборудованийе те кӗртсе;

б) пур тӗрлӗ машинсене те туйанма.

Строителствӑ ӗҫӗсен планӗнче ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, обйазателлӑ задани вырӑнне хурса, тӗпрен тумали йусав строителстви йенпе мӗн-мӗн тумалине кӑтартса парать.

17. Машинсем туйанмашкӑн пама палӑртнӑ укҫа-тенкӗрен ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн тракторсем, комбайнсем, автомашинсем, сложнӑй молотилкӑсем, трактор плугисем, автоцистернӑсем, станоксем туйанма центртанах тӳлемели укҫа-тенке уйӑрса хӑвараҫҫӗ.

18. Республикӑсен ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗсем, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗсем уйрӑм МТС-сен ҫулталӑкра капитал хывмали планӗсене, строителствӑ ваљљи тата йалхуҫалӑх машинӗсем туйанма кайmali укҫа-тенке обйазателлӑ уйрӑмӑн кӑтартса, ҫирӗплетеҫҫӗ.

МТС директорӗ, кӑтартса панӑ лимитсен виҫипе, мӗнле строителствӑ тумалине тата мӗнле машинсем туйанмалине татӑклӑн палӑртать.

19. Тӗп йусав тӑвакан машинӑ-трактор мастерскойӗсен строителствин титул спискисене ҫирӗплетме ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Економически Совета тӑратать.

МТС ваљљи кирлӗ ытти пӗтӗм ҫуртйӗрсен титул спискисене, республикӑ ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗ, край (облӑҫ) ҫӗрӗҫ пайӗ кӑтартса панӑ лимит виҫипе, МТС директорӗ ҫирӗплетет.

Ҫурт-йӗрсене тӗпрен йусамали расходсене МТС производствӑ расхочӗсен ҫулталӑклӑх сметине—ҫурт-йӗр ҫулталӑкра пӗтмели нормӑсен 75 процентӗ чухлӗ—кӗртеҫҫӗ.

20. Планра палӑртман тӗпрен тумали ӗҫсене ваљљи укҫа-тенкӗ пама ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ хӑйӗн аллинче—ҫулталӑкра тӗпрен тумали ӗҫсене ваљљи капитал хывмали планӑн 3 процентӗ чухлӗ - резерв хӑварать.

21. Тӗпрен тумали ӗҫсене ваљљи укҫа-тенкӗ Йалхуҫалӑх банкӗ парать.

22. МТС-сем ӗҫлесе панишӗн колхозсен тӳлемели (натурӑ тата укҫа) пӗтӗмпех государствӑ доходне кӗрет.

МТС-син ҫак ӗҫсене туса тӑмала:

а) туса панӑ ӗҫсемшӗн колхозсен, МТС колхозсемпе тунӑ договорта кӑтартнӑ ставкӑсем тӑрӑх тата правителствӑ постановленийӗсенче кӑтартса панӑ тӑрӑх, натурӑ тата укҫан мӗн чухлӗ тӳлемелине палӑртмала;

б) тракторпа туса панӑ ӗҫсемшӗн колхозсене, договорта кӑтартнӑ срuksenче, счотсем ҫырса памала;

в) колхозсен натурплатӑ мӗн чухлӗ тӳлемелине тата мӗн чухлӗ тӳленине шута илсе тӑмала;

г) колхозсем натурплатӑна вӑхӑтра турттарса парассишӗн ответ тытмала.

23. МТС-сем туса панӑ укҫан тӳлемели ӗҫсемшӗн колхозсем—кашни тӗрлӗ ӗҫсемшӗн тӳлемели расценкӑсем тӑрӑх тӳлеҫҫӗ,—ҫав расценкӑсене ССР Сойузӗн Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ССР Сойузӗн Финанс Халӑх Комиссариачӗпе килӗштерсе тӑвать, вӗсене ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Економически Совет ҫирӗплетет. Тӳлессине МТС колхозсемпе тунӑ договорта палӑртнӑ срuksenче тӳлемеле. Укҫа тӳлемели, ӗҫсемшӗн панӑ счетсен копийӗсене МТС ҫийӗнчех районри финанс пайне тӑратать, унӑн укҫа-тенкӗ бӳджетӑн тупӑшне вӑхӑтра кӗнине тӗрӗслесе тӑмала.

Телейлӗ ҫемйе

ЙЕТӖРНЕ. Анат-Йавӑшри „Восток" колхоз членӗ Ваҫилий Гаврилов семйинче тӑхӑр ҫын. Ӗлӗкхи вӑхӑтра пулсан, йышлӑ ачалӑ чухӑнсем асап тӳссе кӑна пурӑннӑ. Гаврилов колхозник пуйан та куљтурӑлӑ пурӑнать. Хӑй коњухра ӗҫлет, арӑмӗ—уй-хир ӗҫӗнчи ударница. Кӑҫал вӗсем 400 пӑта йахӑн тӗштырӑ илчӗҫ.

Кунсӑр пуҫне тата нумай ачалӑ пирки государствӑ Гаврилов семйине икӗ пин тенкӗлӗх пулӑшу пачӗ. Ку укҫапа Гаврилов йулташ хӑйӗн ачисене тумтирсем, шкулта вӗренмели хатӗрсем туйанса пачӗ.

В. Йемелйанов.

Аслӑ Йелчӗксемпе Патрекелсем ӑмӑртаҫҫӗ

ЙЕЛЧӖК. Аслӑ Йелчӗкри Ленин йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем Патрекелӗнчи „Осоавиахим" колхоз членӗсемпе 1938 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн социалисӑмла ӑмӑртӑва тухрӗҫ.

Ленин йачӗпе тӑракан колхоз иртнӗ ҫулта кашни гектартан вӑтам шутпа 17-шер центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Лайӑх тӑрӑшса ӗҫлекен колхозниксем 800-шер пӑт тӗштырӑ илнӗ. Ӗлӗк чухӑн пурӑннӑ Петрушкин, Катин М., Виссарионов т. ыт. те 500-шер пӑт тӗштырӑ илчӗҫ. Ҫакӑн пек ҫитӗнӳсем колхозниксен ӗҫлес хастарлӑхне татах та хӑпартрӗҫ.

Ленин йачӗпе тӑракан колхоз Патрекелӗнчи „Осоавиахим" колхоза ӑмӑртӑва чӗнсе кашни гектартан вӑтам шутпа тӗштырӑ—120-шер пӑт, 7 центнер кантӑр вӑрри тата 9 центнер сӳс илме обйазателствӑ илчӗ. Ҫак обйазателствӑсене пурнӑҫлассипе колхоз пӗтӗм вӑйа, колхозниксемпе колхозницӑсене мобилизацилерӗ.

Ленин йачӗпе тӑракан колхозра та, „Осоавиахим" колхозра та Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ флот 20 ҫул тултарнӑ уйав тӗлне ҫуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Суртлӑ мар вӑрлӑхсене суртлипе улӑштарса пӗтерн. Ленин йачӗпе тӑракан колхоз пурӗ 1200 центнер тулӑ, 1900 центнер сӗлӗ улӑштарнӑ. Йалхуҫалӑх машинисене, плугсемпе сӳресене йусаса пӗтернӗ. „Осоавиахим" колхоз пурӗ 20 плуг, 65 сӳре, 3 сейӑлкӑ йусанӑ.

Ку колхозсем пайан-ыранах акана тухма хатӗр. Пайанхи куна 7050 лав тислӗк уйа кӑларнӑ, кӗл 400 центнер, кайӑк кӗшӗк тислӗкӗ—90 центнер, минераллӑ ҫӑнӑхсене 2 тоннӑ хатӗрленӗ. 300 гектар ҫине йур тытнӑ.

Колхозниксем агротехникӑна вӗренес тӗлӗшпе те питӗ интересленеҫҫӗ. Ҫавна шута илсе кашни бригадӑрах агрокружок организациленӗ. Кружокра 200 ҫын вӗренеҫҫӗ. Кружоксене туллимар вӑтам шкулта вӗрентекенсем йертсе пыраҫҫӗ. Ку колхозсенче ҫуракине хатӗрленессине агроплансем тӑрӑх туса пыраҫҫӗ.

Халӗ ӑмӑртакан колхозсенче Краснодар крайӗнчи Щчербински районӗнчи йалхуҫалӑх стахановцисем Совет Сойузӗнчи колхозниксене, совхозсенчи рабочисене, трактористсене, комбайнерсене, агрономсене, МТСтанцинчи тата ҫӗрӗҫ органӗсенчи работниксене пурне те чӗнсе каланине сӳтсе йавса конкретлӑ обйазателствӑсем илчӗҫ.

Ф. Майков.

—О—О—

Агрокружок йӗркелӗ ӗҫлет

ВӐРНАР. Хорнзорти Чапайев йачӗпе тӑракан колхозра агрокружок йӗркелӗн ӗҫлесе пырать. Агрокружока колхозри опытник Тимофейев йертсе пырать. Кружокра 42 ҫын вӗренет.

Ст. Улангай.

Февраљти буржуалӑ-демократилӗ ревољуци *)

I.

Столицӑри восстани

Стачкӑ хӑватлӑн сарӑлса пынӑ. Анчах вӑл буржуалӑ-демократилӗ ревољуцийӗн тӗп ыйтӑвне — самодержавийе сирпӗтсе антарассине татса паман. Вӑл массӑсене хускатса вӗсене кӗрешӳн аслӑ формине — хӗҫпӑшаллӑ восстанийе куҫма хатӗрлесе, ревољуци мӗн тери пиҫсе ҫитнине кӑтартса панӑ. Стачкӑ мар ҫапнӑ кивӗ режима. Самодержавийе рабочисем тата вӗсен ҫумне хутшӑннӑ салтаксем пӗрле кӗрешсе сирпӗтсе антарнӑ.

1917 ҫулти февралӗн 18-мӗшӗнче[1]) Путиловский заводӑн пӗр мастерскойӗ забастовкӑ пуҫласа йанӑ. Пур цехсенче те митингсем пулса иртнӗ. Дирекци патне требованисем кайса пама рабочисем делегаци суйласа хунӑ. Директор расчет тӑвассипе хӑратса илнӗ. Февралӗн 22-мӗшӗнче завода хупнӑ. Тепӗр кун 20 пин путиловец хулана тухса утнӑ. Униччен малтанхи кун Петроградра продовољстви пирки вӑйлӑ хумхану пулса иртнӗ. Путиловецсем урама тухни вут-кӑвар ҫине ҫу сапнӑ пек пулса тӑнӑ. Февралӗн 23-мӗшӗнче Пӗтӗм тӗнчери работницӑсен кунӗ пулнӑ. Бољшевиксен партийӗ рабочисене стачкӑ тума чӗннӗ. 90 пине йахӑн рабочи забастовкӑ тунӑ. Кӑнтӑрла Петроград хӗррисем демонстрантсен аллинче пулнӑ. Халӑх хушшинче ытларах работницӑсем пулнӑ. Хӗрарӑмсем сехечӗ-сехечӗпе ҫӑкӑр илме тӑнӑ черете пӑрахса забастовкӑ тӑвакансем ҫумне пӗрлешнӗ. Демонстрантсем хӑйсем кӑна забастовкӑ туман— вӗсем ыттисене те ӗҫ пӑрахтарнӑ. Рабочисен темӗн пысӑкӗш ушкӑнӗ патрон заводне хупӑрласа илсе, унта пилӗк пин ҫынна ӗҫ пӑрахтарнӑ. Выступленисем „Ҫӑкӑр!" тенӗ лозунгпа пулса иртнӗ. Ревољуцилӗ лозунгсем ҫырнӑ хӗрлӗ йалавсем те сахал мар, хӗрлӗ йалавсем уйрӑмах бољшевикла комитет хӗрӳлӗн ӗҫленӗ Выборгский районра нумай пулнӑ. Полици пӗлтернӗ тӑрӑх, кӑнтӑрла иртсен 3 сехет тӗлнеле пӗр тӑватӑ пин ҫынна йахӑн Выборгский йенчен Самсонийев кӗперри урлӑ каҫса Троицкий площаде тапса тухнӑ. Халӑх хушшинче ораторсем тухса тӑнӑ. Утлӑ тата ҫуран городовойсем демонстрацине вӑйпа салатнӑ. Полицине отпор пама вӑй ҫитерейменрабочисем булочнӑйсене ҫӗмӗрнӗ, чӑрсӑртарах городовойсене тыта-тыта хӗненӗ.

Каҫхине Выборгский районӗнчи бољшевикла комитет пухӑннӑ. Забастовкӑна малалла тӑсма тата ӑна пӗтӗмӗшле стачкӑ туса йама постановлени йышӑннӑ.

Тепӗр кун, февралӗн 24-мӗшӗнче, демонстрацисем ҫӗнӗ вӑйпа пуҫланса кайнӑ. Стачкӑ ӳссе сарӑлса пынӑ. 200 пине йахӑн рабочи ӗнтӗ забастовкӑ тунӑ. Кӗперсем ҫинче заставӑсем тӑнӑ, анчах рабочисем пӑр тӑрӑх пынӑ. Хӗрлӗ йалавсем йатнӑ демонстрантсем хула хӗррипчен хула варрине — Невский проспект патнеле тапӑннӑ. Пӗр ҫӗртен полици хӑваласа йарсан, вӗсем калама ҫук хӑватпа тепӗр ҫӗре пухӑннӑ. Ревољуцилӗ йурӑсем: „Тӗп пултӑр патша!", „Парӑр ҫӑкӑр!" тесе кӑшкӑрнӑ сасӑсем Невскийе вӗҫӗмсӗр йан-йанӑ.

Шанчӑклипе шанчӑклӑ маррине тӗрӗслемен пирки, ҫарсене сыхланарах ӗҫе кӗртнӗ: уйрӑм тӗслӗхсем ҫар пӑхӑнма пӑрахни ҫине кӑтартса панӑ. Васильевский утрав ҫинче казаксен патрулӗ полици приставӗн помощникне, халӑх хупӑрласа илнӗскерне, пулӑшу паман; Знаменский площадре халӑх утлӑ городовойсене хӑваласа йанӑ, казаксем халӑха нимӗн те туман.

Бољшевиксен Партин Тӗп комитечӗн бӳровӗ хастарлӑ кӗрешӗве салтаксене йавӑҫтарма постановлени йышӑннӑ.

Хирӗҫӳсем февралӗн 25-мӗшӗнче Петроград урамӗсенче тата та вӑйлӑрах пулнӑ. Сапаланчӑк забастовкӑсенчен пӗтӗмӗшле забастовкӑ пулса пынӑ. Рабочисем полиципе тытӑннӑҫемӗн хайартарах тытӑҫнӑ. Рабочисем хӳтленнӗ ҫӗҫ те мар ӗнтӗ, тапӑннӑ та, чылай ҫӗрте полици отрйачӗсен командирӗсене амантнӑ тата вӗлернӗ. Анчах демонстрантсен хӗҫпӑшал ҫукки полицине ытларах вӑй панӑ. Каҫ пулнӑ тӗле полици урамсене тасатма та та хӑйпӗр „йӗрке" кӳме те пултарнӑ. Ҫар округ командуйушчийӗ Хабалов, рабочисем февралӗн 28-мӗшӗнче ытларикунран вара ӗҫе тытӑнмала, унсӑрӑн вӑхӑтлӑха ҫартан хӑварнӑ ҫынсене пурне те фронта йаратпӑр, тесе пӗлтернӗ.

Самодержави хӑвачӗ хавшаман пек туйӑннӑ, анчах ӑна ниҫе антарас хӑрушӑ паллӑсем тухса тӑнӑ. Ҫарсем полицине пулӑшма отказ тунӑ, тӳррӗмех те полицине хирӗҫ тӑнӑ. Хусан соборӗ патӗнче Дон казакӗсен полкин 4-мӗш взводӗ городовойсем тытса тӑнӑ граждӑнсене хӑтарнӑ, арӗсленӗ ҫынсене сыхласа тӑнӑ городовойсене хӗнесе тӑкнӑ. Выборгский йенче 1-мӗш Дон полкин казакӗсем чакса кайса, сводный отрйад командирне, Палфейев полковнике, тата городовойсене халӑх умне пӑрахса хӑварнӑ. Знаменский площадре казаксем митинга салатса йама хӑтланнӑ полицейскисене хӗстерсе чакарнӑ, ҫавӑнтах Крылов хушаматлӑ пристава вӗлернӗ. Патша, сывӑхӗнчисем Ставкӑпа тавлашнӑ, Петрограда хӑварма пиксннӗ казаксем ыттисенчен малтан пӑрӑнма тапратнӑ.

Ҫар пӑхӑнма пӑрахни ҫинчен красногвардеец П. Д. Скуратов. Путиловский заводри рабочи, ҫапла каласа парать;

„Епӗр Богомолов урам вӗҫӗнче пӗр 300—400 ҫын пысӑк мар ушкӑна организацилентӗмӗр, унтан вара, Петергоф шоссе ҫине тухсан, пирӗн ҫумма рабочисен темӗн пысӑкӗш масси пӗрлешрӗ. Патаксем ҫине хӗрлӗ тутӑрсем ҫыхса лартрӑмӑр та—хӗрлӗ йалав пулса тӑчӗ—„Марселйеза" йурласа Нарвӑ хапхисем патнеле утрӑмӑр. Ушаков урамӗ патне ҫитсен пире хирӗҫ утлӑ полици отрйачӗ сиксе тухрӗ. Вӑл унтала та кунтала ӑшӑтма тытӑнчӗ, пирӗн ӗнтӗ ирӗксӗрех тарса пӗтме тиврӗ... Нарвӑ хапхисем патӗнче каллех темиҫе пин путиловец тата хими заводӗнчи рабочисем пухӑнчӗҫ. Организациленӗ пыма шут. тытрӑмӑр. Малтисем пӗр-пӗрне алӑран тытрӗҫ. Ҫапла вара малала утрӑмӑр... Садовойран Невскинеле пӗрӑннӑччӗ ҫеҫ, Аничков дворецӗ патӗнчен пире хирӗҫ хӗҫӗсене кӑларнӑ кавалери ескадронӗ ҫӗмӗрттерсе пырать. Епӗр айаккала пӑрӑнтӑмӑр, вӗсем вара пирӗн хушӑран тухса кайрӗҫ. Епӗр пӗр харӑссӑн „урра" кӑшкӑртӑмӑр, анчах вӗсен йенчен нимӗнле ответ та пулмарӗ.

Литейнӑй патне ҫитсен, епӗр Выборгский район рабочийӗсемпе тӗл пултӑмӑр та, Знаменский площадӗ патнеле пӗрле кайрӑмӑр. Унта пӗрлехи митинг пулчӗ. Ҫав вӑхӑтра Балабин гостиници хӳттинчен утлӑ полици отрйачӗ сиксе тухрӗ те, малта пыракан пристав, йалав йӑтса пыракан хӗрарӑма, пирӗн заводри бољницӑ кассинче ӗҫлекенскере, хулпуҫҫинчен хӗҫпе ҫапрӗ. Вӑл шӑвӑнаймарӗ,—епӗр ӑна лаша ҫинчен туртса антартӑмӑр та Фонтанкӑна кайса пӑрахрӑмӑр. „Тӗп гостиницӑ" патӗнчен Лиговкӑ тӑрӑх казаксем сиктерсе пынине курсан, городовойсем Суворов проспекчӗпе кайала ҫавӑрӑнса кайрӗҫ, казаксем вара пирӗн хыҫҫӑн пычӗҫ.

Епӗр хамӑр хушӑмӑрта, мӗне пӗлтерет ку, ҫарсем хушшинче кӑлтӑк пуҫланнӑ-и мӗн, тесе калаҫса илтӗмӗр те: апла пулсан, ревољуци ҫӗнтерӗ тенӗ вывод турӑмӑр"[1]).

Анчах ҫавӑн пек вывод тума иртерех пулнӑ. Ҫарсем полиципе пӗрле пулнӑ-ха. Петроград ҫар округ ҫарӗсен командуйушчийӗ генерал Хабалов каҫ пулас чух аслӑ главнокомандуйушчийӗн штаб начаљникне, „халӑха салатса йанӑ", тесе пӗлтернӗ. Каҫхине Хабалов Ставкӑран ҫапла распорйажени илнӗ:

„Столицӑри йӗркесӗрлӗхе, Германие тата Австрие вӑрҫӑ йӑвӑр вӑхӑтра чӑтма ҫукскере, ыранах чарса лартма хушатӑп. Николай II"[1]

Патша приказӗ Хабалова хыпӑнтарса йӳкернӗ. Февраљ ревољуцийӗ хыҫҫӑн следстви комиссийӗ тунӑ допросра вӑл ҫапла каласа панӑ:

„Ҫав телеграммӑ—мӗнле калас ӗнтӗ сире?—чӑннипе тӳррӗн каласан: вӑл мана аптратса йӳкерчӗ... Ыранах мӗнле чарса лартмала? „Ыранах" тенӗ... Мӗн тӑвас ман? Мӗнле чарса лартас? „Парӑр ҫӑкӑр" тесе каланӑ чух,—ҫӑкӑр панӑ та, ӗҫ те пӗтнӗ. Анчах йалавсем ҫине „Тӗп пултӑр самодержави" тесе ҫырнӑ пулсан, ҫӑкӑр ӑҫтан лӑплантарма пултарӗ ӗнтӗ? Мӗн тӑвас-ха? Патша хушнӑ. Перес пулать"[2].

Хабалов полк командирӗсене тата полици участкисен начаљникӗсене, виҫӗ хут асӑрхаттарнӑ хыҫҫӑн пӑшалтан пемеле тенӗ приказ панӑ. Аслӑ главнокомандуйушчийӗн штаб начаљникӗ генерал Алексейев Ҫурҫӗрпе Хӗвеланӑҫ фрончӗсен главнокомандуйушчисене Петрограда пит хӑвӑрт пӗрер утлӑ ҫар бригади йамашкӑн хатӗрлеме приказ панӑ. Вӑл тӳрӗ провод тӑрӑх Ҫурҫӗр фрончӗн штаб начаљникне ҫапла каланӑ:

„Самант йӗркесӗр хӑрушӑ. Хӑвӑртрах ирӗп ҫарсем йама мӗн кирлине пурне те тумала. Пирӗн малашнехи пурнӑҫ ыйтӑвӗ ҫавӑнта пулать"[3].

Пӗр ҫавӑнпа ҫеҫ чарӑнса тӑмасӑр, охранӑ отделенийӗ февралӗн 25-мӗшпе 26-мӗш хушшинче ҫӗрле Петроград тӗрмисене шанчӑксӑр елементсемпе лӑках чыхса тултарнӑ. Бољшевиксен Петроград комитечӗн пилӗк членне те арӗсленӗ. Кӗрешӗве йертсе пырасси бољшевиксен Выборгский район комитечӗн аллине куҫнӑ. Патша стройӗ массӑлӑ арӗссемпе, фронтран хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем чӗнсе илнипе ревољуцийе кӗтсе илме хатӗрленӗ.

Февралӗн 26-мӗш кунӗ униченхи кунсенчен лӑпкӑнрах пуҫланнӑ пек туйӑннӑ. Вырсарникун пулнӑ, рабочисем хулана малтанхи кунран кайарах йулса тухнӑ. Урамсем праҫник чухнехи пек пулнӑ. Тулти лӑпкӑлӑха кура, Хабалов черетлӗ ҫӗнтерӳлӗ депешӑпа Ставкӑна ҫапла пӗлтернӗ:

„Пайан, февралӗн 26-мӗшӗнче, хулара иртенпех лӑпкӑ"[1].

Правителствӑ ҫарӗсене хула центрне пухса тӑратнӑ. Ҫӳлӗ ҫуртсен тӑрӗнче, полици участкисенче пулемйотсем хатӗр тӑнӑ. Патша влаҫӗсен планӗ ҫакӑнта пулнӑ: вӗсем рабочисене пӑшалсенчен тата пулемйотсенчен пӗрсе кӗтсе илме шутланӑ. Невана рабочи районӗсенчен полицине ҫар застависем уйӑрса тӑнӑ. Кӑнтӑрла тӗлнеле хула центрне—Невский патнеле—бољшевиксем йертсе пыракан пысӑк йышлӑ демонстрантсем вӑйпа ҫӗмӗрсе кӗре пуҫланӑ.

Рабочисем тӑшманпа столицӑ варринче тытӑҫма тӑрӑшса, Невский патнеле пынӑ. Вӗсене пӗр хӗрхенмесӗр пӑшалтан пенӗ. Невскийе кайма май пулман. Кунӗпех пӑшалтан пенӗ.

Волынский полкӑн вӗренӳ командинчи пӗр салтак, волынецсем рабочи демонстрацине перес ҫӗре хутшӑнни ҫинчен ҫапла каласа парать:

„Акӑ командӑ вырӑнта ӗнтӗ. Рабочисем Николайевский вокзал площадне пӗтӗмпех йышӑннӑ. Салтаксем ҫаплах хӑйсен йатне тума, сехре хӑпартма ҫеҫ чӗнсе илнӗ тесе шанаҫҫӗ. Анчах вокзал ҫинчи сехет йӳппи вуниккӗ патнеле ҫывхарсан, салтаксем иккелене пӑрахрӗҫ— пеме приказ панӑ. Харӑс пенӗ сасӑ йанӑраса кайрӗ. Рабочисем пур йеннеле чупа пуҫларӗҫ. Малтанхи хут харӑссӑн персе йанисем пакама та тенӗ пек тивмен. Салтаксем, калаҫса татӑлнӑ пек, ҫӳлеле пенӗ. Анчах халӑх ҫине офицерсем тӗллесе тытнӑ пулемйот ҫатӑртатма пуҫларӗ те, йурпа витӗннӗ площад рабочисен йунӗпе хӗрелчӗ. Ҫынсем, пӗр-пӗрне таптаса,

*) „История гражданской войны в СССР" кӗнекерен.

¹) Датӑсене пур ҫӗр те кивӗ стильпе кӑтартнӑ.

1. Скуратов П. Д. Октябрь в Петрограде. „История пролетариата СССР", 1932., № 11, стр. 110—111.

¹ Падение царского режима. Стенографический отчет допросов и показаний, данных в 1917 г. в Чрезвычайной следственной комисси Временного правительства. Том I, Ленинград, госиздат, 1926 с., стр. 220.

² Ҫавӑнтах, стр. 220.

³ Февральская революция 1917 г. „Красный архив", 1927 г., № 2 (21), стр. 10

³ Фавральская революция 1917 г. „Красный архив" 1927 ҫ., №2 (21) стр. 5.

Совет Сойузĕн Геройĕпе тĕл пултăмăр

(Красноармейец çырувĕ)

Йанварĕн 30-мĕшĕнче йаланхи кану кунĕнчи пекех витере хĕрÿлĕ ĕç пычĕ. Каçхине лашасене ытти кунсенчен иртерех тасатрăмăр. Хамăр та васкавлăн апатлантăмăр. Часах клуба çитсе, сценă çывăхнерех вырăн йышăнмала. Пайан пирĕн пата Совет Сойузĕн Геройĕ М. В. Водопйанов йулташ килет.

Клуб пайан урăх тумпа тумланнă. Плакатсем. Лозунгсем. Çулпуçсен портречĕсем. Кашни красноармейцăн кăмăлĕ нихăçанхинчен ытла çĕкленнĕ. Йурă, калаçу, кулă, таша. Шавлать пайан клуб. Пур боецсен куçĕсем те сценă çинче. Кĕтетпĕр Водопйанов йулташа.

Акă, пирĕн командирпа Совет Сойузĕн Геройĕ М. В. Водопйанов йулташ пырса çитрĕç. Боецсем пурте ура çине тăчĕç. Шавлăн алă çупни, „урра!" кăшкăрни, саламлă сасăсем—темиçе минута тăсăлчĕç. Водопйанов йулташ сăмах илчĕ. Клуб алă çупнипе йактраса кайрĕ. Водопйанов йулташ авиаци мĕнле ÿссе пыни, Совет авиацийĕпе пĕрле хăй ÿсни, Совет Сойузĕн çĕнтерÿвĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Уйрăмăнах вăл Çурçĕр полюсне çĕнсе илни çинче ытларах чарăнса тăчĕ. Хăй йепле ÿссе çитĕнни çинчен çапла каласа кăтартрĕ:

— Епĕ сухаçăччĕ. Авиацине сухаçă ăсталăхĕпе пытăм. Совет авиацийĕ ÿсрĕ. Епĕ те унпа пĕрле ÿсрĕм. Октябĕр революцийĕ, Совет влаçĕ, Ленин—Сталин партийĕ ман пек сухаçăсене, ман пек рабочисене, ман пек пĕтĕм ĕççыннисене пинĕ-пинĕпе, мĕлйун-мĕлйунĕпе асаплăхран хăтарса, çутă та уçă çул çине кăларчĕ, пăхса ÿстерчĕç, пиртен тĕнчене паллă çынсем турĕç,—тет Михаил Водопйанов.

Унтан вăл ĕçре тĕл пулакан йăвăрлăхсене мĕнле çĕнтермели çинчен каларĕ. Водопйанов йулташ сăмахĕ кашни боецăн, командирăн чĕрине вирлĕн кĕрсе вырнаçать. Герой йачĕпе, Хĕрлĕ Çар йачĕпе, аслă Сталин йачĕпе каллех „урра" кăшкăрни, саламлă сасăсем клуба йанратаççĕ.

Ку куна боецсем нихăçан та манас çук. Боецсем, командирсем, политработниксем хăйсен ĕçĕнче Совет Сойузĕн Геройĕ М. В. Водопйанов йулташ пек ĕçлеме пулчĕç. Тăшман Совет территорийĕ çине сăмсине пырса чикме хăтлансан, вĕсем пурте пĕр çын пек пулса, тăшмана вăл ăçтан килнĕ, çавăнтах çĕмĕрсе аркатасси çинчен Водопйанов йулташа шантарчĕç.

Йулашкинчен красноармейецсен пултарулăх вечĕрĕ пулчĕ. Красноармейецсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Водопйанов йулташ вечĕр пĕтиччен ларчĕ. Вăл красноармейецсен пултарулăхне ырларĕ, ăна тата сарса пыма сĕнчĕ.

Геройпа тĕл пулни хастарлăха çĕклентерчĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине „отлично" вĕреннипе кĕтсе илетпĕр.

Мих. Йегоров.

ДА ЗДРАВСТВУЕТ НАШ КРАСНЫЙ ФЛОТ—ЗОРКИЙ СТРАЖ МОРСКИХ ГРАНИЦ СССР!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă тĕле Изогиз И. Жуков художникăн „Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Флот—ССР Сойузĕн тинĕс чиккисен çивĕч хуралĕ!" йатлă плакатне кăларнă.

Сойузфото репродукцийĕ.

Чăваш Пединститучĕ Хĕрлĕ Çар кунне çитĕнÿсемпе кĕтсе илет

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарни пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕшĕн чаплă уйав пулса тăрать.

Чăваш Пединститучĕ çак уйава пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илет.

Кунти Осоавиахим организацийĕ (председателĕ Николайев йулташ) оборонă ĕçне вĕренес тĕлĕшпе чылай пысăк ÿсĕмсем турĕ.

Осоавиахим членĕсен шучĕ институтра 1936 çулта 392 çын пулнă пулсан, халĕхи вăхăтра вĕсем 450 çын шутланаççĕ.

Членсен йышĕ ÿссе пынипе пĕрлех студентсем хушшинче Ворошилов пек тĕл перекенсен, ГТО, ПВХО, ГСО значокĕсен нормисене панисен хисепĕ те чылай ÿсрĕ.

1937 çулта институтра Ворошилов пек тĕл перекенсен йышĕ—125 çын, ПВХО значокĕн нормисене панисен йышĕ—296 çын пулнă пулсан, пайанхи куна Ворошилов пек тĕл перекенсем 208 çын, ПВХО значокĕн нормисене панисем—579 çын, ГТО значокне илнисем—90 çын, ГСО значокĕн нормисене панисем—134 çын шутланаççĕ.

ПВХО значокĕн нормисене парас тĕлĕшпе студентсем хушшинче 18 инструктор ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă май 13 студент-физкультурниксем Шупашкар—Ишлей—Трак—Нурăс—Елĕк—Çĕмĕрле—Иетĕрне—Мăн Сĕнтĕр—Шупашкар маршрутпа 289 километр хушши йĕлтĕрлĕ поход туса иртерчĕç.

Йĕлтĕрçĕсен команди поход вăхăтĕнче колхозниксене ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти Пленумĕн решенийĕсене ăнлантарса панă.

Çавăн пекех тĕл перес йенпе февралĕн пуçламĕш кунĕсенче пулса иртнĕ Шупашкар хулинчи ăмăртура пединститут пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ (И. И. Мухатов йулташ). Хĕрлĕ Çар кунне кĕтсе илнĕ май, Осоавиахим организаци 200 студента ПВХО значокĕн нормисене пама хатĕрлет.

Арк. Нестеров.

Чăваш АССР-чи йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йала строителстви валли укçа-тенкĕ пухассине туса иртерессии çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулти йанварĕн 23-мĕшĕнче, 1935 çулти йанварĕн 14-мĕшĕнче „Хуласенче тата йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йала строителстви валли укçа-тенкĕ пухасси çинчен" (ССРС Саккунĕсен сборникĕ, № 5, 1934 ç., 38 ст., № 4, 35 ç., 31 ст.), 1936 çулти йанварĕн 5-мĕшĕнче „Налог законодателствине улăштарасси çинчен" (ССРС с. с. № 2—36 ç., 18 ст.), 1937 çулти мартăн 14-мĕшĕнче ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1934 çулти йанварĕн 23-мĕшĕнче „Хуласенче тата йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йала строителстви валли укçа-тенкĕ пухасси çинчен" йышăннă постановленин 18-мĕш статйине тата „уйрăм çынсенчен тупăш налогне илмели положенин" 5-мĕш статйине улăштарасси çинчен йышăннă постановленисем (ССРС с. с. 19 №—37 ç., 72 ст.) тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1936 çулти йанварĕн 13-мĕшĕнчи 12-мĕш №-лĕ тата 1938 çулти йанварĕн 28-чи 14-мĕш №-лĕ „Йалта пурăнакан халăхран пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йала строителстви валли укçа-тенкĕ пухасси çинчен" йышăннă постановленийĕсем тăрăх, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Районсем тăрăх колхозниксемпе ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсенчен культура нушисем валли илекен укçа-тенкĕн вăтам хисепне çапла тăвас:

РАЙОНСЕМ	Колхозниксен пĕр хуçалăхĕнчен тенкĕпе		Йединоличник хуçалăхĕсенчен иртнĕ çулти йалхуçалăх налогĕн çакăн чухлĕ процентне	
	Пĕрлешĕнмен тупăшсем çук пулсан	Пĕрлешĕнмен тупăшсем пур пулсан	Ĕç выльăхĕ те, çĕрĕçĕнчен мар пулнă тупăш та, рынок тупăшĕ те çук пулсан	Ĕç выльăхĕ пур, йе рынок тупăшĕ пур, йе тата çĕрĕçĕнчен мар пулнă тупăш пур пулсан
Улатăр	7	27	95	120
Елĕк	7	27	95	130
Патăрйел	7	24	95	120
Вăрнар	7	30	95	140
Йĕпреç	7	27	95	140
Ишлей	7	27	95	120
Канаш	7	27	95	140
Куславкка	7	24	95	120
Хĕрлĕ Чутай	7	30	95	140
Кувакинă	7	27	95	130
Сĕнтĕрвăрри	7	27	95	120
Парачкав	7	30	95	130
Тăрхан	7	24	95	140
Тутаркас	7	30	95	120
Трак	7	27	95	120
Вăрмар	7	27	95	130
Çĕрпÿ	7	27	95	120
Шупашкар	7	27	95	120
Шăмăршă	7	24	95	120
Шăхасан	7	27	95	140
Шăнкăртам	7	24	95	140
Çĕмĕрле	7	27	95	140
Йетĕрне	7	30	95	140
Йелчĕк	7	24	95	120
Тăвай	7	27	95	120

2. Çак постановленин 1-мĕш статйинче тупă ставкăсене пăхăнса, районсенчи ĕçтăвакан комитетсем уйрăм йалсем валли, кирлĕ пулсан, уйрăм колхозсем валли те татăклă ставкăсем туса параççĕ, вĕсене ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1935 çулти йанварĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленин 2-мĕшпе 4-мĕш статйисенче кăтартнă ставкăсенчен иртсе йе чакарса тумала мар. Çав ставкăсем пĕр-пĕр йалти йе колхозри пур хуçалăхсем валли те пĕр пек пулмала.

Асăрхаттарни: 1938 çулти культсбор укçи пухмали ставкăсене иртнĕ çулти хисеппех хăварас.

3. Йединоличник хуçалăхĕсенчен культсбор оклачĕ, льготăсем параччен, çав вырăнти пĕрлешĕнмен тупăшсем илекен колхозниксем валли тунă ставкăран 25 процентран кайа мар пысăкрах пулмала.

4. Йалхуçалăх налогĕ çинчен кăларнă Положенин 95-ш статйи тăрăх йалхуçалăх налогĕ хунă йединоличник-хресчен хуçалăхĕсен, культсбор укçи иртнĕ çулти йалхуçалăх налогĕ çумне 200 процент хушнă чухлĕ хисеппе тÿлемеле, вĕсем культсбор укçи тÿлессинче нимĕнле льготăсемпе те усă курмаççĕ.

5. Ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсем, вĕсем культсбор укçи тÿлессин малтанхи срукĕччен колхоза кĕнĕ пулсан, колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕр пек хисеппех тÿлеççĕ.

Колхозран тухнă хуçалăхсем культсбор укçине йединоличник хуçалăхĕсем пекех, çав укçа-тенке илессине туса ирттернĕ чухне пулнă хайсен тупăшĕсем тăрăх тÿлеççĕ.

6. Культсбор укçи хумаççĕ: рабочисемпе служащисен—колхоз членĕсен хуçалăхĕсем çине, вĕсен тĕп работникĕ çак çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне йаланах кĕрĕшсе пĕр çултан кайа мар ĕçленĕ пулсан, çавăн пекех тата хуçалăхăн ытти ĕçлеме пултаракан членĕсем те, вĕренекенсемпе килти хуçалăха туса пыраканскер пуçне, кĕрешсе ĕçлеççĕ пулсан, хушма йалхуçалăх тăпăшĕсенчен культсбор укçи тÿлемеççĕ.

Колхозра тăман рабочисемпе служащисен хуçалăхĕсем те хуçалăх членĕсем çÿлте асăннă условисене тивĕçлĕ пулсан тата хушма йалхуçалăхĕ çав районри колхозниксем валли йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх ирĕк панă хисепрен иртсе каймаст пулсан, çавăн пекех хушма йалхуçалăх тупăшĕнчен культсбор укçи тÿлемеççĕ. Йалхуçалăх налогĕ пухакан вырăнсенче, çавăн пек хуçалăхри тĕп работник йаланах кĕрĕшсе пĕр çултан кайарах ĕçлет пулсан, вăл хуçалăха культсбор укçи тÿлес ĕçе пĕрлешĕнмен тупăш илекен колхозниксен хуçалăхĕсем валли тунă ставкăпа тÿлетереççĕ.

7. Йалти вырăнсенчи промысла кооперацийĕ ертел членĕсен хуçалăхĕсем культсбор укçи пĕрлешĕнмен тупăш илекен колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕр пекех тÿлеççĕ, анчах çакăн пек пулсан:

а) промысла кооперацийĕ ертелĕн çав членĕн колхоз уставĕ тăрăх пĕрлештерме тивĕçлĕ йалхуçалăхĕ çук пулсан, тата

б) çав вăхăтрах вăл хуçалăхăн ĕçлеме пултаракан пур членĕсем те, килхуçи арăмĕсĕр тата вĕренекенсемсĕр пуçне, промысла ертел йе колхоз членĕнче тăраççĕ, йе тата кĕрĕшсе ĕçлеççĕ пулсан.

Колхозниксен хуçалăхĕсене памалли льготăсем

8. Культсбор укçи тÿлессинчен пĕтĕмĕшпех хăтараççĕ:

а) Колхозниксен хуçалăхĕсене, вĕсен хуçалăхĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем ССР Сойузĕн орденĕсемпе йе революцилĕ хисеплĕ хĕçпăшалпа наградăланă çынсем тата ĕç геройĕсем, çавăн пекех тата инвалидăн 1-мĕшпе 2-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем пулсан;

б) Çул иртсе ватăлнине ĕçлеме пултарайман (60 çултан иртнисем) колхозниксен хуçалăхĕсене, çав хуçалăхри çемйере ĕçлеме пултаракан членсем çук пулсан;

в) План тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă, çавăн пирки иртнĕ çулта йалхуçалăх налогĕ тÿлессинчен хăтарнă хуçалăхсене, çавăн пекех тата — йалхуçалăх налогне хурассине туса иртернĕ хыççăн план тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă тата ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче „Йалхуçалăхĕнче пурăнма çĕнĕ çĕре куçакансене памалли льготăсем çинчен" йышăннă 115-2043 №-лĕ постановлени тăрăх льготăпа усă куракан хуçалăхсене.

9. Районри финанс пайĕсем, районри ĕçтăвакан комитетсен президиумĕсем йышăннă тăрăх, колхозниксен хуçалăхĕсене культсбор укçи тÿлессинчен пĕтĕмĕшпех йе пĕр пайне кăна хăтарма пултараççĕ (сăмахран, инкек-синкекрен сийен курнисене, т. ыт).

10. Хуçалăхра икĕ члентан ытла ĕçлеме пултарайманнисем пулсан, ун пек колхозник хуçалăхĕсен культсбор укçи тÿлес хисеп чакать: ĕçлеме пултарайманнисем виççĕ пулсан—20 процент, ĕçлеме пултарайманнисем тăваттă пулсан—30 процент, ĕçлеме пултарайманнисем пиллĕк йе ытларах пулсан—40 процент.

11. Скидкă илме хуçалăха права памала тунă чухне—ĕçлеме пултарайманнисем тесе çаксене шутлаççĕ:

а) 60 тата ытларах çула çитнĕ арçынсем, 55 тата ытларах çула çитнĕ хĕрарăмсем, 16 çула çитеймен ачасем;

б) уйхир тата ытти ĕçсене хутшăнма пултарайман чăлахсем;

в) Социаллă пулăшу йе социаллă страховани органĕсем инвалидăн I-мĕшпе II-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем.

Йединоличниксен хуçалăхĕсене памалли льготăсем

12. Культсбор укçи тÿлессинчен пĕтĕмĕшпех хăтараççĕ:

а) çул иртсе ватăлнипе (60 çултан иртнисем) ĕçлеме пултарайман йединоличник хуçалăхĕсене—çав хуçалăхри çемйен ĕçлеме пултаракан членсем çук пулсан;

б) План тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă, çавăн пирки иртнĕ çул йалхуçалăх налогĕ тÿлессинчен хăтарнă хуçалăхсене, çавăн пекех тата 1937 çулти йалхуçалăх налогне пухассине туса ирттернĕ хыççăн план тăрăх урăх çĕре пурăнма куçнă тата ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕн 1937 çулти нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 115/2043 номĕрлĕ постановленийĕ тăрăх льготăпа усă куракан хуçалăхсене.

13. Çул иртсе ватăлнă йединоличниксен хуçалăхĕсене культсбор укçи тÿлессинчен колхозниксен хуçалăхĕсене валли тунă йĕркесемпех хăтараççĕ (8 ст., б пункт).

14. Ĕççынни йединоличниксен хуçалăхĕсем, вĕсен хуçалăхĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем, ССР Сойузĕ орденĕсемпе йе революцилĕ хисеплĕ хĕçпăшалсемпе наградăланă çынсем тата ĕç геройĕсем, çавăн пекех инвалидăн I-мĕшпе II-мĕш группине кĕртнĕ ĕçпе вăрçă инвалидĕсем пур пулсан, анчах хуçалăхри çемйен ĕçлеме пултаракан ытти членĕсем пур пулсан, культсбор укçинчен—20 процент чухлĕ, тата хуçалăхри çемйен ĕçлеме пултаракан ытти членсем çук пулсан—40 процент чухлĕ скидкăпа усă кураççĕ.

15. Районри финанс пайĕсем, районри ĕçтăвакан комитетсен президиумĕсем йышăннă тăрăх, ĕççынни йединоличниксен начартарах уйрăм хуçалăхĕсене культсбор укçи тÿлессинчен пĕтĕмĕшпех йе пĕр пайне хăтарма пултараççĕ.

Культсбор укçи тÿлемели сруксем

16. Культсбор укçи икĕ срукра тÿлемеле: 50 процентне — çак çулти февралĕн 15-мĕш тĕлне, 50 процентне—мартăн 15-мĕш тĕлне.

17. Районсенчи ĕçтăвакан комитетсене хуçалăхсене пĕтĕмĕшпех тата тĕрĕс шута илессине, культсбор укçи хисепне вăхăтра тата тĕрĕс шутласа хурассине тата çаккунпа тунă мĕн пур льготăсене парассине пурнăçлама хушас.

18. Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1936 çулти йанварăн 15-мĕшĕнче, 1936 çулти февралĕн 2-мĕшĕнче, 1937 çулти йанварĕн 4-мĕшĕнче тата 1937 çулти йанварĕн 27-мĕшĕнче Чăваш АССР-чи хуласемпе йалти вырăнсенче пурăнмали çуртйĕр тата культурăпа йала строителстви валли укçа-тенкĕ пухассине туса ирттересси çинчен йышăннă постановленийĕсем хăйсен вăйне çухатнă тесе шутлас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. Андрейева.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасов.**

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. Васильев.**

Шупашкар хули.
1938 çулти февралĕн 7-мĕш.

картишсене уткăнчĕç. Утлă жандармери позицирен персе кăларнă „тăшмана" йĕрле пуçларĕ, çав йĕрлесси вара сĕм-çĕрлеччен пычĕ. Çавăн хыççăн тин çар чаçĕсене казармăсем тăрăх салатрĕç. Пирĕн командă штабс капитан Лашкевич йертсе пынипе казармăна çĕрле шăп пĕр сехетре таварăнчĕ" [1].

Охранкă отделенийĕн справки тăрăх, çав кун пĕр Знаменский площадĕнче кăна 40 йахăн вилĕ тата çавăн патнелех аманнисем пулнă. Ку хисепе демонстрантсем хăйсемпе пĕрле илсе кайма ĕлкĕрнисем кĕмеççĕ.

Февралĕн лăпкăн пуçланнă 26-мĕш кунĕ усă граждан вăрçине пĕтнĕ. Павловский полкăн запасри баталйонĕн 4-мĕш роти, хăйсен полкĕнчи вĕренÿ командийĕ рабочисене персе пăрахнă çĕре хутшăнниншĕн тарăхса, утлă городовой отрйадне пăшалтан пеме тытăннă. Ытти чаçсем хута кĕменскер, вăл парăнса хĕçпăшалне панă—21 çын çеç восстани тăвакан халăх патне винтовкăсемпе кайнă. Пуçаракансене 19 çынна офицерсем тупса тытнă. Арĕсленисене Петропавловский крепăçăн Трубецкий бастионне кайса лартнă. Вĕсем персе вĕлерес хăрушлăх умĕнче тăнă.

Граждăн вăрçин малтанхи кунĕ патша стройĕ çĕнтернипе пĕтнĕ.

Каç пулас тĕле хулана демонстрантсенчен тасатса çитернĕ—патша хушнине кунниче те пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах, самодержавине хÿтлекенсем, рабочисен массисем демонстрантсене пенĕ çарсем хушшинче вăйĕ илсе пынине асăрхаман. Пролетариатăн революцилĕ витĕмлĕхĕ самодержави тунă çĕнтерĕвĕрен чылай пысăкрах пулнă. Салтаксем хăйсен командирĕсене çиленсе тарăхни кашни çĕнĕ немесрен ÿссе пынă. „Çĕнтерекенсемшĕн" салтаксен кураймалăхĕ çав тери хăнăхнă йапала пулнă, вĕсем шăпах та çавна асăрхайман.

Пролетариат 1905 çулти революцийĕн тĕп урокĕпе—çарпăн кĕрешме кирли çинчен калакан урокпа анлăн усă курнă.

Рабочисем тата уйрăмăнах работницăсем салтаксене сырса илнĕ. Вĕсем салтак штыкĕсене алпа йарса тытса, хăвăр тăвансене, революцийĕ рабочисен йунĕ айне ан тăвăр тесе каланă. Салтаксем пĕччен тата пĕчĕкшер ушкăнпа ыттисенчен тăра-тăра йулнă. Восстани тăваканĕсем вĕсене хĕрÿлĕн ÿкĕтленĕ. Нумай пулмасть мобилизациленĕ салтаксем—столицă гарнизонĕ пуринчен ытла 2-мĕш разрйадри ратниксенчен йе йулашки призыв çамрăкĕсенчен тăнă—рабочисем хумханнине чĕре патне çывăх йышăннă. Салтаксем ним чĕнмесĕр, кăмăлсăр пăхса илнĕ, хĕçсе пыракан халăхран пăрăннă, анчах революцилĕ кăмăл вĕсене çавăрни уççăн курăнса тăнă ĕнтĕ. Салтаксенчен хăшпĕрисем тапăннисемпе айăпланнисенчен хÿтленме те хăтланнă. Хăшĕсем офицерсем çине — хÿтлĕхсĕр халăха пенишĕн айăплисем çине сиввĕн тĕллесе кăтартнă. Теприсем, аврламан винтовкăсене кăтартса, вăйлăрах хĕсме сĕннĕ.

Пролетарисен çирĕплĕхĕпе маттурлăхĕ çарсене иккелентерме пуçланă, салтаксен кăмăлне туртнă.

Павловецсене çăмăллăн çĕмĕрсе тăкни, патша влаçне шанчăк панă. Шалти ĕçсен министăрĕ Протопопов çăмăллăн сывласа патша патне çапла çырнă:

„Павловский полкăн евакуацилenĕ 4-мĕш роти хăй тĕллĕн тухнисĕр пуçне, çарсем пĕтĕм вăйпа çапăçрĕç" [1].

Донесени вĕççĕнче Протопопов сĕмсĕр суйнă:

„Февралĕн 27-мĕшĕнче рабочисен пĕр пайĕ ĕçе тытăнма шутлать" [2].

Çав, хăйне хăй шанса суйни, тăмсай жандармсем сарăлса кайнă ĕçсене сахал чухлани çинчен калать.

Патша сатрапĕсем сĕмсĕрленсе çитсе малтанхи кунсенче тунă пĕчĕкçĕ уступкăсене те кайала илме васканă. Петроград градоначалникĕ продоволстви ĕçне хула думине пама йышăннă решенине пăрахăç тунă. Государствă думине.—унăн ларăвĕнче февралĕн 26-мĕшĕнче пĕрсе пăрахни çинчен ыйту парассине кĕтнĕ,—патша указĕпе салатса йанă. Çав указа 1916 çулти нойабĕртех хатĕрленĕ пулнă. Ăна министăрсен Совечĕн председателне Голицăна парса, патша çапла каланă:

„Усрăр хăвăр патăрта, кирлĕ пулнă чух усă курăр" [1].

Министăрсем уссăр васканă. Государствă думи çав хумханулă кунсенче правителствăна ыйтусем парса, чунне лăплантарнă, анчах ыйтăвĕсене персе пăрахни çинчен мар. Петроградри продоволстви ĕçĕ мĕнле пыни çинчен панă. Шултра буржуазипе вак буржуазин хăраса ÿкнĕ представителĕсем—Родичев, Керенский, Чхеидзе.—халăхсене пăкласа урамсенче пере-пере вĕлернине илтмĕш пулнă, патша стройне ыйхакса черетлĕ сăмах çаптарнă. Политикăна çаптаракан чăкăлтăш интеллигентсем йулашки „хыпарсене" ыйраса нимне пĕлмесĕр хваттертен хваттере чупнă.

Государствă думин председателĕ Родзйанко событисене тарăнĕшне хăрушлăхне ыттисенчен кăшт лайăхрах чухланă. Родзйанко, монархипе çывăх хутшăнса, монархи йăлтах ишĕлсе анас самант çитсе тăнине туйса илнĕ. Вăл Николай II-патшана çĕрпыв „шанăçĕне" усă куракан çĕнĕ правителствă туса хума ÿкĕтленĕ.

„Кирек мĕнле вăраха йани те вилĕмпе пĕрех."— тенĕ вăл патшана панă телеграммăра.—Çак сехетре ответлăх венценсеç çине ан ÿктĕр тесе турра кĕлтăватăп."

Анчах патша ытлашши тăрăшакан тарçи çине алне çеç сулнă. Телеграммăна хирĕç Николай двор министăрне Фредерикса çапла пĕлтернĕ:

„Хайхи шыçмак ман патна каллех тĕрлĕрен пули-пулми çинчен çырса йанă, анчах çавна хирĕç епĕ ответ та памастăп".

(Малалли пулать.)

[1] Пажетных К. И. Волынцы в февральские дни. Воспоминания. Рукописный фонд ИГВ, № 488

[1] Блок А. Последние дни императорской власти. Пичетлесе кăларман документсем тăрăх. Петроград. „Алконост", 1921 ç., стр. 66—67.

[2] Çавăнтах стр. 67

[1] Падение царского режима. Стенографический отчет допросов и показаний, данных в 1917 г. в Чрезвычайной следственной комиссии Временного правительства. Том II, Ленинград, Госиздат, 1925 ç., стр. 265.

Тĕпком решенийĕ çинчен пĕлмеççĕ

ВĂРМАР. Районри чылай организацисенче ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн пленумĕ йышăннă решенисем çинчен пĕлмеççĕ. Кивĕ Шулханти „Смычка" колхозри партин пуçламĕш организацинчи коммуниссем ку вăхăта çитиччен-те Тĕпком пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йавман. Çавнашкалах политкружоксем те ĕçлемеççĕ кунта. Виçĕ уйăх хушшинче те пĕр занйати те пулман. Парти пуçламĕш организацинче пухусем пулни икĕ уйăх иртнĕ. Ку парторганизаци çинчен Вăрмар райкомĕ те манса кайнă.

Косойкин

Парти историне вĕренеççĕ

Кăшаркассинчи (Çĕрпÿ р-нĕ) йалсоветне кĕр кен „Пионер", Буденный йачĕпе тăракан колхозсенчи активиссем валли „Пионер" колхозри клуб çумĕнче парти историне вĕренмели кружок организаципе. Кружокра 26 çын. Вĕсем парти историне Ленин, Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренеççĕ. Кружок членĕсем парти Тĕпкомĕ çумĕнчи институт паракан радиолекцисене итлеççĕ. Йанвар уйăхĕнче 6 занйати туса ирттернĕ. Кружока Николайев пропагандист йертсе пырать.

Н. Окунев.

Малта пыракан çамрăксем комсомола кĕреççĕ

Çĕрпÿри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕренекенсем, чи активлă çамрăксем—4 çын комсомола кĕчĕç. Халĕ татах 3 çамрăк комсомола кĕме заявлени панă.

А. Иванов.

Сасăллă кино Вăрмарта

Вăрмар. Районри клуб Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле сасăллă кино кăтартма тытăнчĕ. Февралĕн 8-мĕшĕнче пĕрремĕш хут „На Дальнем Востоке" фильм кăтартрĕç. Ку картинăна 900 çын ытла курчĕç. Куракансем питĕ савăнчĕç. Вĕсем малашне „Ленин в Октябре", „Петр I", „Чапаев" кинокартинăсене кăтартма ыйтаççĕ.

В. Алендейев.

Румыни правителстви отставка тухнă

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕш (ТАСС). Рейтер агенстви радиопа пĕлтернĕ тăрăх, Румынин Гога правителстви отставка тухнă. Отставка король йышăннă. Король премиер пулнă ултă çынпа, вĕсен шутĕнче национал-царанисен партин лидерĕ Маниу та пулнă, калаçнă та ĕнтĕ. Вăл калаçусен тĕллевĕ—Румынин çĕнĕ правителствине тумашкăн пур демократиле партисене те пĕрлештерме май пуррипе палăртасси пулнă, тесе шухăшлаççĕ.

Çакна палăртса хăварма интереснă,—тесе пĕлтерет агенстьă,—Двореца чĕнмесĕр хăварнă пĕртен-пĕр политикăлă лидер Кодреану—„тимĕр гварди" ятлă фашисла организацин руководителĕ пулнă.

Рейтер агенствин корреспонденчĕпе калаçнă чухне Маниу, манăн партин çĕнĕ правителствă тăвас ĕçе хăй çине илме хатĕр, епĕ Румыни Англипе, Франципе тата Лига наципе таччăн çыхăнса ĕçлессине уйрăмăнах саламлана пулăттăм, тенĕ.

Агенстьă пĕлтернĕ тăрăх, Гога кабинечĕ отставка тухнин тĕп сăлтавĕ—ССР Союзĕн Румынири ĕçĕсен поверенныйĕ Бутенко йулташ çухалнă май совет правителстви çирĕп протест пани пулнă.

Румынире çĕнĕ правителствă

Бухарестран Румынири çĕнĕ правителствă туни çинчен пĕлтереççĕ. Правителствă пуçлăхĕ пулма Румынири православнăй чиркӳ патриархне Мирон Кристиана лартнă. Министерсен Совечĕн вице-председателĕ, вăлах урăхçĕршыв ĕçĕсен министрĕн обйазанăçĕсене вăхăтлăха туса пыраканĕ — Татареску (либерал), çар министрĕ — Антонеску генерал (Гога правителствинче нацилĕ оборона министрĕ пулнăскер).

Халь нимĕнле ĕçсенче те тăман министрсем правителствăна çаксем кĕреççĕ: Иорга, Ангелеску, маршал Аверску, Вайда—Войвода генерал Войкойану тата Миронеску.

* * *

Румынири çĕнĕ правителствăра политикăлă дейателсем, Кароль королĕн çывăх çыннисем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Вĕсен шутне чи пирвайах „Национально народная" текен партин лидерĕ, Румынири фашисăмăн идеологĕ, хальхи короле пăхса ӳстернĕскер, профессор Николай Иорга кĕрет. Ун хыççăн „Румынский фронт" текен фашисла партин руководителĕ Александр Вайда—Войвода, вăл пысăк финансис тата паллă нефтепромышленник.

Çав çынсен шутнех Георгий Татареску та (1934 тата 1937 çулсенче премиер пулнăскер) кĕрет, вăл банк капиталĕпе тата пысăк çĕр хуçисемпе таччăн çыхăнса тăрат. Çар министрĕ генерал Антонеску та çавсен шутнех кĕрет.

Çĕнĕ кабинетăн ытти членĕсенчен „Халăх" партин лидерне Аверескру маршала паллă тумала. Вăл 1907 çулта хресченсен восстанине хайаррăн путарса лартнипе (ун чухне вуншĕр пин хресчене вĕлернĕ) чапа тухнă.

(ТАСС).

Фашисла Германири тĕрмере ларакансен пурнăçĕ

ЖЕНЕВĂ, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Германири правăпа ирĕклĕхе хӳтĕлекен Пĕтĕм тĕнчери Лигăн Тĕп бӳровĕ Германири тĕрмесенче ларакансен тата концентрацилĕ лагерсенче тытса усракан çынсен пурнăçĕ çинчен Лига нацин генеральнăй секретарĕ Авеноль патне меморандум (доклад) йанă.

Меморандум çакна кăтартса парат: йулашки пилĕк çул хушшинче фашиссем вунă пин çын ытла вĕлернĕ. Фашиссен тĕрмисенче йутçĕршыв çыннисене 27 çын асаплантарса вĕлернĕ.

Пилĕк çул хушши ĕнтĕ ним судсăр-мĕнсĕрех заложниксем вырăнĕнче паллă общесtвăлă дейателсене тĕрмесенче тытса усраççĕ. Вĕсем хушшинче: пацифис Осецкий, коммуниссем: Тельман, Литтен, Штеккер, Нейбацер, Гешке тата урăххисем те. Социал-демократсем: Мирендорф, Шумахер, Хейльман тата урăххисем те. Концентрацилĕ лагерсенче тытса усракансене чи пĕчĕк „айăпсемшĕнех" тем тĕрлĕ наказанисем тăваççĕ, сăмахран, 25 хутчен патакпа çаптарни, вунтăвата кун хушши карцерта тытса усрани, çакса тата персе вĕлерни.

Меморандум çумне хушса çырнинче асаплантарса вĕлернисен професисене, хăçан вĕлернисене тата ыт. те кăтартнă. Кунсăр пуçне 1933 тата 1937 çулсем хушшинче политикăлă ĕçсемшĕн пуçĕсене касса татса вĕлернĕ 90 çынăн йачĕсене кăтартнă. Спискăра 1936 тата 1937 çулсенче тĕрмесенче вĕлернĕ йе хăйсене хăйсем пĕтернĕ 118 çынăн (вĕсенчен нумайĕшĕ рабочисем) йачĕсене илсе кăтартнă. Çавăн пекех спискăра „политикăлă преступленисемшĕн" ĕмĕрлĕхех тĕрмесенче хупса усрамала тунă 63 рабочин йачĕсене кăтартнă.

Гестапо (Германири вăрттăн полици) тĕрмере ларакансене тата концентрацилĕ лагерсенче тытса усракансене вăйпах, ирĕксĕрлесех „нимĕç емигрантсем концентрацилĕ лагерсенчи пурнăç çинчен елекленине" хирĕç хăйсен тăванĕсем патне çырусем çыртарат.

Йутçĕршывсенче

ПРАГА, февралĕн 10-мĕш. „Прагер Тагеблатт", „Прагер Миттаг" т. ыт. хаçатсен Венăри корреспонденчĕсем çакна пĕлтереççĕ: Германин вунщар генералĕсемпе офицерĕсем, хăйсене арĕслесрен хăтăлас шутпа, Австри территорийĕ çине куçса пыраççĕ; вĕсенчен нумайĕшĕсем Швейцарийе кайаççĕ. Австрипе Германи чиккинче Германи хăйĕн чикĕри хуралне йатарласах ударлă-отрйадсемпе вăйлăлатнă.

Прагă хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, рейхсвертан кăларнă тата арĕсленĕ офицерсем халех те çĕршерĕн шутланаççĕ. Германирен килекен сведĕнисем тăрăх, офицерсене ухтарасси тата арĕслесси халь те пулса пырат.

ПАРИЖ, февралĕн 10-мĕш. Еспань агенстви çапла пĕлтерет: Овийедора пăлхавçăсем, „Франко генерал режимне хирĕç ĕçлеççĕ" тесе, 1.144 çынна арĕсленĕ.

БАРСЕЛОНА, февралĕн 10-мĕш. Барселонăра илнĕ сведенисем тăрăх, йанвар уйăхĕн вĕçĕнче фашиссен влаçĕсем икĕ полковнике, пĕр майора, икĕ капитана тата икĕ прапорщике персе вĕлернĕ. Вĕсене, „саботаж тунă, вăл саботажа пула тар склачĕсем çунса кайнă" тесе айăпланă. Нумайах пулмаст, портлă хулара Мотрилре (Испанин кăнтăр йенĕпче) тар склачĕ çунса кайнă хыççăн, фашиссен влаçĕсем 500 çынна арĕсленĕ, кайран вĕсенчен нумайĕшне „тарма пикеннĕ вăхăтра" персе вĕлернĕ.

Вăрçăлă турăсăрсен конференцийĕ

Вăрнар. Йанварĕн 30-мĕшпе февралĕн 2-мĕш хушшинче районра пур йалсенче те вăрçăлă турăсăрсен союзĕн йачейкисенче суйлавсем пулса иртрĕç. Суйлав вăхăтĕнче çĕнĕрен 4 йалта вăрçăлă турăсăрсен союзĕн йачейкисене организациленĕ. Пайанхи куна районра СВБ йачейкинче 1030 член шутланса тăрат.

Февралĕн 8-мĕшĕнче вăрçăлă турăсăрсен районри конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире Вăрнарти вăтам шкул директорĕ Шарабин йулташ тĕн сĕрĕмĕпе кĕрешесси çинчен доклад туса пачĕ. Доклад тăрăх нумай делегатсем тухса калаçрĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсем мĕнле пулса пыни çинчен каласа пачĕç.

Районра ку таринчен вăрçăлă турăсăрсен союзĕн йачейкисем начар ĕçлесе пынă. Вĕсем хăйсем массăна таччăн çыхăнтарма пултарайман. Айкăш, Елмен, Мăн Турхан йалĕсенчи вăрçăлă турăсăрсен союзĕн йачейкисем хут çинче анчах тăнă. Вĕсене ĕçре нимĕнле пулăшу та пулман.

Иккĕмĕш ыйтупа суйлавсем пулчĕç. Вăрçăлă турăсăрсен союзĕн районри советне 9 çынтан, ревизи комиççине 3 çынтан суйласа хăварчĕç.

Ник. Козлов.

Колхоз театрĕ Елĕкре

Чăвашсен Йетĕрнери 3-мĕш колхоз театрĕ икĕ кун хушши Елĕкре Осиповăн „Айдар" пйесине выльаса кăтартрĕ.

Артиссем пйесăна питĕ лайăх хатĕрленнĕ. Уйрăмăнах куракансен кăмăлне Пинерпи ролĕнче Тимофейевă, Айдар ролĕнче Кольцов, Сентнер ролĕнче Тимофейев артиссем выльани килĕшрĕ.

Февралĕн 9-мĕшĕнче колхоз театрĕ Елĕкрен колхозсене тухса карĕ.

В. Йефремов.

Йулашки почтăран

Вулакансенчен мăшкăлани

Шăхасан районĕнчи „Вăйлă тырпулшăн" хаçат редакцийĕ хаçата йĕркелĕ кăларнипе мухтанма пултараймаст. Хаçат редакцийĕ вулакансене нимĕн вырăнне те хумаст. Çавăнпа та, час-часах хаçат нимĕн йĕркесĕр тухат.

Пирĕн алăра хаçатăн 12-мĕш номĕрĕ. Анчах ку хаçата нийепле те вулама май çук. Хаçатăн иккĕмĕш страницинче икĕ хут пичетлесе кăларнă та, пĕр статйине те вулама май килмест. Çĕтĕк тăла татăкĕ пек çеç. Ку çеç те мар. Хаçат ССР Союзĕн Аслă Совечĕн президиум членĕсен сăнĕсене пичетлесе кăларнă. Анчах пĕрин сăнне те паллама çук. Вараланчăк хут татăкĕ çеç.

Ку ăнсăртран пĕр номĕр теме çук. Февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн пата çакăн пек хаçата Шăхасан районĕнчи Малтикассинчен, Йămашран, Кошнаруйĕнчен йарса пачĕç. Çыру авторĕсем: çакăн пек хаçата вараласа кăларни редакци вулакансенчен куçа кĕретĕнех мăшкăлани пулмаст-ши?—тесе ӳпкелешеççĕ.

Тĕрĕс. Редакци вулакансенчен мăшкăлат çеç те мар, хăйĕн тимсĕрлĕхне те кăтартат.

Государствă филармонинче

Чăвашсен государствă филармонийĕн коллективĕ хутшансах пырат. Çĕнĕ пултарулă кадрсем ӳсеççĕ. Йулашки вăхăтра Мускавран йатарласа музыкă ăстаçисем илсе килчĕç.

Филармонинче артиссен шучĕ 50 çынна çитет. Февралĕн 1-мĕшĕнче кашнинпе уйрăмăн заньатисем туса иртерме тытăнчĕç. Коллективра виçĕ группă. Вĕсенчен чи вăйли—операра йурлакансем. Кайарах пыракан икĕ группăна музыкă ăстаçисем—Варламов, Герты Занд, Могилевский тата Ростиславин йулташсем çине тăрсах вĕрентеççĕ, вĕсене майăн 1-мĕш тĕлне операра йурлама тата пĕччен (соло) йурлама вĕрентсе çитерме тăрăшаççĕ.

Филармони Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕн йубилейне хатĕрленет. Йубилей кунĕсенче вечĕрсенче йурлама чăвашла, вырăсла йурăсем, операă сыпăкĕсем вĕренеççĕ.

А. Семенов.

КĔСКЕН

Канашри вагонсем йусакан заводра хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе ĕçлекен С. Фомин йулташ çак çулшăн рабочисемпе служащисем хушшинче 1456 екземпьар тĕрлĕрен хаçат-журнал сарнă.

Çырнă хаçат-журналсене вăл подписчиксем патне вăхăтра çитерет.

Д. Иванов.

Йетĕрне районĕнчи „Çĕнĕ хунав" колхоз правленин кăçалччен радио пулман. Халĕ колхоз радиоприйомник илчĕ. Каçсеренех колхозниксем колхоз правленине пухăнса радио тăрăх тĕрлĕрен хыпарсем итлеççĕ.

Н. Тимофейев.

Шахмăт кĕнеки

Нумайах пулмаст Шупашкарти типографи рабочийĕ М. Ижейев йулташ „Чăваш Коммунĕ" хаçатра шахмăтпа шашкă вăййисем çинчен чăвашла кĕнекесем пачах çукки çинчен çырнăччĕ. Ку вăйăсемпе интересленекенсем нумайланса пынă май, районсенчен те çавăн çинченех çырса, чăвашла кĕнекесем ыйтса çыру йама пуçларĕç.

Çавна асра тытса, Чăвашиздат шахмăтла выльама вĕренесси çинчен кĕнеке куçарттарса пичете пачĕ. Кĕнекене çамрăк шахматист, шашкăла выльама вĕренесси çинчен пĕчĕк кĕнеке çырнă Афанасйев йулташ куçарчĕ.

Халиччен шахмăтпа шашкă çинчен чăвашла кĕнекесем пулман пирки, ку çĕнĕ ĕç—шахмăт кĕнекине куçарассипе пичетлесе кăларасси чылай йăвăр, пысăк ĕç пулса тăрат. Пĕр йенчен пирĕн шахмăт кĕнекисене (диаграммисене) наборлама кирлĕ шрифтсем пулманни ĕçе ку таринччченех кансĕрлесе тытса тăчĕ. Халь ĕнтĕ типографире ку шрифт пур. Çавăнпа та кĕнекине çырса парсан, типографи ăна хăвăртах пичетлесе кăларма пултарат. Асăннă кĕнеке те пичетленмесĕр нумайах выртма кирлĕ мар.

Ку кĕнеке пичетленнĕ май тата хаçатсене йулашки вăхăтра (раснах пионерсен хаçатĕнче) шашкăпа шахмăт çинчен ытларах çырма тытăннă май, епĕ ĕçĕн тепĕр йенĕ çинчен каласшăн. Шашкăпа шахмăт вăййисемпе интересленекенсем умне пĕр ыйту сиксе тухат—унпа чĕлхепе çырулăх ыйтувĕсемпе тата кĕнеке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсем те интереслеесси паллах. Вăл—терминсен ыйтувĕ.

Халĕ географи, хими т. ыт. учебниксемпе кĕнекесене çĕнĕрен куçарса пичетлесе кăларнă чухне епĕр пур пек терминсене çĕнĕрен тĕрĕслесе тухса йышăнатпăр. Йурăхсăррисене пăрахатпăр. Çавăн пекех пирĕн шахмăт çырулăхĕн терминĕсене те йышăнса çирĕплетмеле. Малтанхи кĕнекесенчех терминсем йенĕпе тĕрĕс çул çине тăрасси паха ĕç. Вырăнсенче хăшпĕр терминсене хăнăхса çитнĕ пулсан, çав терминсемпе усă курмала. Сăмахран, акă, халь пичете панă кĕнекере шахмăт фигурисен йачĕсене: Король, Ферзĕ, Ладйа, Слон çаплах хăварнă. „Конь" фигурăна çеç „Лаша" тесе куçарнă. Анчах кĕскетсе çырнă чухнехи условнăй паллă „Л" мар, вырăсли пекех „К" йулат. Кун пек туни пăтраштармала пек те туйăнат. Анчах ăна часах хăнăхасси те паллах. „Лашапа ил", „Лашапа çи", „Лашана хĕстер", теççĕ выльакансем. Çавăнпа та „Коньпа çи" тесе куçарман. Вырăсла кĕнекесене вулама хăнăхма аван пултăр тесе, тата „Ладйа" фигурă паллипе пăтрашăнмала тăвас мар тесе „Лаша" фигурăна кĕскен „К" паллăпа çырмала. Шахмăт хăми çинчи клеткăна вырăсли пекех „полĕ" тесе хăварни те çав йенчен аван. „Пӳлĕм", „ана", „хир", „йăва", „лаптăк"—пĕри те йурăлă мар пек. „Ходсем", „çурев", „сикни", „çини", „çапса илни" терминсем тата вăйă положенийĕ çинчен çырнă вырăнта хăнăхма кансĕртерех тĕлсем пур („иккĕлетнĕ, виççĕлетнĕ, умхыçлă, çыхăнулă пешкăсем" т. ыт.).

Вырăнсенчи шахматиссемпе шахмăт кружокĕсенче тăракансен чĕлхе ыйтувĕсемпе интересленекенсен çак йенпе хăйсен сăмахне каласа, шахмăтпа шашкă сăмахне каласа, шахмăтпа шашкă çинчен чăвашла кĕнеке кăларас ĕçе пулăшмала.

Кĕнекесем ăнланмала çăмăл, тĕрĕс тата хăвăртрах пичетленсе тухасси паллах.

Н. Ваçанкка.

Ватă кĕслеçĕ

ЕЛĔК. Йалкăшри „Новая сила" колхоз членне Йемелйан Никифоров йулташа районра палламан çын çук та пулĕ.

Вăл 63 çулхи ватă кĕслеçĕ.

Револьуциччен Никифоров йулташ питĕ начар пурăннă. Мĕн пур хуйхă-суйхăна пусармашкăн вăл 20 çулта чухне кĕсле калама вĕреннĕ.

Револьуциччен Никифоров йулташ кĕсле çинче кăмăла савăнтармали пĕр савăнăçлă çемĕ те каламан, мĕншĕн тесен пурнăç савăнăçлă пулман. 1917 çул хыççăн, Никифоров йулташăн кĕсле хĕлĕхĕсем ирĕклĕх йуррисем йурлама пуçланă.

40 çул ытла ĕнтĕ вăл кĕсле çинче выльама пуçлани, çавăнпа та Никифоров кĕслепе 120 ытла йурă-ташă кĕввисем выльама пĕлет. Уйрăмăнах вăл „Песня о Сталине", „Песня о Ворошилове", „Песня о Родине", „Марш веселых ребят", „Пирĕн униче шĕшкĕлĕх", „Туй йурри", „Интернационал" йурăсене, „Подеспань", „Осенний вальс", „Полька", „Фокстрот" ташă кĕввисене питĕ лайăх, çĕкленӳлĕ хаваслăхпа выльаса парат.

Арк. Нестеров.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

ЙЕТĔРНЕ. Колхозсем 1937 çулта вăйлă тырпул туса пысăк тупăш илнине кура, районра нумай йалсенчи тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксем колхоза нумайрах та нумайрах кĕрсе пыраççĕ.

Çак кунсенче Алешкинă колхозне 2 хуçалăх, Анат-Йавăш колхозне 3 хуçалăх, Кăташри „Пионер" колхоза 5 хуçалăх Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхоза 3 хуçалăх, Мăн Шемертенри „Ленин хушăвĕ" колхоза 4 хуçалăх, Ирçери „Сура" колхоза 2 хуçалăх кĕчĕç.

Ник. Цветков.

Çатракас йалсоветĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан колхоза (Тутаркас районĕ) çак кунсенче 3 хуçалăх çĕнĕрен кĕчĕç.

Н. Пушкин.

Вĕренетпĕр, савăнатпăр

(Красноармейец çырувĕ)

Хĕрлĕ Çар уйавне епĕр политикăлла Çарĕç вĕренӳвĕнче çеç мар тата художествăлă пултарулăх тĕлĕшĕпе те пысăк çĕнтерӳсем тунише кĕтсе илетпĕр.

Уйав йачĕпе Çар чăçĕсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура епĕр малти ретре пулассишĕн кĕрешетпĕр. Ку тĕлĕшпе подразделенисем, командирсем, боецсем хушшинче ăмăрту пырат. Договорсене куллен тĕрĕслеççĕ. Результатсене ăмăрту хăми çинче, стена хаçатĕнче, многотиражкăра йаланах сутатаççĕ.

Çак малти вырăншăн пыракан кĕрешӳ савăнăçпа, пултарулăхпа таччăн çыхăнат. Заньатисем хыççăн йурă-ташă, репетицисем... Канмали кунсем умĕн тата канмали кунсенче клубра художествăлă пултарулăх вечĕрĕсем пулаççĕ. Иртнĕ кану кунĕнче йатарласа красноармейецсен пултарулă концерчĕ пулчĕ. Концерт бойецсен пысăк мăстăрлăхне кăтартрĕ. Уйрăмăнах Паташов красноармейцăн Кавказ ташшийĕ чылайччен алă çуптарчĕ.

Красноармейецсен пултарулăхне командирсен арăмĕсем те активлăн хутшăнаççĕ.

Мих. Йегоров.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Граждăн вăрçин халăх геройĕсем

ДУНДИЧ

„Пĕчĕк ача чĕрелĕ арăслан" — çапла йат панă Ворошилов йулташ Хĕрлĕ Çарăн йумахри пек паттăр боецне Иван Антонович Дундич йулташа. Вăл чăннипех те арăслан пулнă—хăйулă, хăравçăсăр, çирĕп боец. Украинăра, Царицын патĕнче, Ростов çывăхĕнче, Житомир патĕнчи паттăр çапăçура 4-мĕш тата 6-мĕш утлă çар дивизинчи боецсем пурте хăйсемпе йунашар Дундича курнă.

Йуланутпа çӳреме ăста, пăшалпа питĕ тĕл йеме пĕлнĕ Дундич фронт умĕнче вĕçтерсе пынă, йе тăшман тылне кĕрсе кайса унта хăратса пĕтернĕ. Вăл 24 хутчен аманнă пулсăн та, пĕрре те Хĕрлĕ Çар ретĕнчен пăрахса кайман.

Дундич йулташăн вăрçăри паттăр ĕçĕсен сыпăкĕсем аса килеççĕ, унăн пĕр ĕçĕ теприччен пахарах, пĕр ĕçĕ теприччен мухтавлăрах. Октйабĕрти социалисăмла револьуци хыççăнах Дундич Хĕрлĕ Гварди ретне кĕнĕ, хăйĕн пурнăçĕн йулашки кунĕсемччченех вăл совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕ, Ленин—Сталинăн аслă партин тивĕçлĕ ывăлĕ пулнă.

4-мĕш утлă çар дивизийĕ Авилово станци патĕнче çапăçнă чухне тăшманăн вăй ытларах пулнă. Шуррисен вăй пысăк пулнă. Шатиловпа Покровский генералсен икĕ корпусĕ Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çине шутсăр хытă танăннă. Çак атакăна хирĕç тăнă вăхăтра, кас пулнă тĕле дивизи командованийĕ 4-мĕш дивизине нулашма хăйĕн йулашки резервине—Дундич йертсе пынă 21-мĕш полка йанă. Çапăçаканçен вăйĕсем танлашнă. Шуррисен утлă çарĕн черетлĕ атаки арканса кайнă.

Вăхăтлăха сывлăш çавăрма май пулнине усă курса, шуррисене хăйсен хыççăн астарса илсе кайас шутпа, дивизи командованийĕ хăйĕн чаçĕсене кайала илсе кайма тытăннă. Шуррисем хĕрлисем хыççăн хыпаланса пынă, вĕсем епĕр çĕнтертĕмĕр тесе мухтанма та хатĕр пулнă. Анчах вĕсем пысăк йăнăш тунă. Дундич йертсе пыракан полк çине тăрса айакала кайнă та, тăшманăн тылне кĕрсе кайнă, унăн артиллерине, иккĕмĕш разрйадри обозне çавăрса илнĕ, çапăçура хĕрлисем çиеле тухнă.

Шуррисем хушшинче пăтрану тухса кайнă. Вĕсем вăрçă пулнă вырăна вуншар тупă тата пулеметсем нумай пăрахса хăварнă. Шурă казаксем темиçе çĕр çын хĕрлĕ утлă çар аллине тыткăна лекнĕ.

Вăрçă ĕçĕнчи чейелĕхĕн, çине тăнин, паттăрлăхăн тепĕр образецне Дундич 1919 çулта Воронеж патĕнче кăтартнă. Унчухне хĕрлĕ утлă Çар Деникина çапса аркатма тунă сталинла плана ĕçе кĕртнĕ. Боецсем тăшманпа çапăçса ăна çĕмĕрсе тăкасшăн çуннă.

Воронеж çине тапăниччен малтан тăшманăн тĕплĕн разведкă тума, унăн оборонине сăнаса пĕлмеле пулнă. Акă сентйабĕрĕн 23-мĕшĕнче Дундич йертсе пыракан утлă хурал Ворона йуханшывĕ урлă каçса Кийвань районĕнче тăшман тылне кĕрсе кайнă.

Çĕрле пулнă. Хĕрлĕ çар разведкисем шуррисен фрончĕ тăрăх хурал тăракан хуралçă заставĕсемпе утлă çар патрулĕсене асăрханă. Ыйту тухса тăнă, тăшман хуралçисенчен мĕнле иртсе каймала?

„Пакунсене çыпăçтармала"—тесе приказ панă Дундич. Тепĕр 10 минутран утлă хурал Задонски шоссе тăрăх малала кайнă.

Кĕтмен çĕртен тĕттĕмре: „тăрăр, кам кайат!" тенĕ сасă илтĕннĕ. Çак кĕске вăхăтра канавран сиксе тухнă икĕ Кубань казакĕ хăйсен винтовкисене утлă хурал çине тĕлленĕ. Дундич нимĕн те хумханман, çĕтсе кайман. Вăл малала тухнă, шурă офицер пек пулса кăшкăрнă:

— Есĕр, камсем, суккăр пултăр-и? Хăвăрăн кайнине курмастăр-и? Епĕ сире, подлецсене...

Шурă салтаксем васкаса ӳкнĕ, хĕрлисен хуралне фронт урлă каçарса йанă. Дундича çакă çеç кирлĕ пулнă. Разведчиксем шуррисем вырнаçнă вырăна хăвăрт çитнĕ, окопсем ăçтине, пралук карса тухнисем ăçтине, хула патне ăçтан ирĕкрех пыма май пуррине сăнама тытăннă.

Йулашкинчен, пулас операци вальли кирлĕ сведенисене пуçтарнă. Çак сведенисене утлă çар корпус штабне вăхăтра çитерме каллех шуррисен фрончĕ урлă каçса каймала пулнă. Пĕр минут кайа йулнийех пĕтĕм ĕçе пăсма пултарнă. Шуррисем хăйсен тылĕнче хĕрлисен утлă хурал пуррине пĕлнĕ, Дундича шыраса тупма кавалериссен ушкăнне йанă.

Генерал Шкуро хăй тылне пырса ӳкме хăйулăх çитернĕ хĕрлĕ боецсене халех тытса килессе кĕтсе тăнă. Анчах çакăн пек савăнăçлă хыпар вырăнне вăл хĕрлисен хуралне шырама йанă поручике касса вĕлернĕ, хĕрлисем тарнă, тенĕ хыпара илнĕ.

Сентйабĕрĕн 24-мĕшĕнче Шкуро генерал Воронежран тухса тарнипе çеç çăлăнса йулнă. Çав кунах каçхине хулари клуба митинга пухăннă Воронежри рабочисем хĕрлĕ командир Дундич йулташа саламланă. Рабочисем унăн паттăрлăхĕпе мухтаннă, ăна коммунисăм ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен примерлă çын тенĕ, вăл çĕнĕ паттăрла ĕçсем тăваса кĕтнĕ. Дундич рабочисем кĕтнине те, вĕсем ĕмĕтленнине те пурнăçа кĕртнĕ.

1930 çулта Дундич 6-мĕш утлă çар дивизинче пулнă. Çак дивизийе Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă командирĕсенчен пĕри С. К. Тимошенко йулташ йертсе пынă. Çак дивизи Кийеври операцинчен пуçласа Львов патне çитиччченех шурă польаксарĕсене темиçе хутчен те çапса çĕмĕрнĕ, вĕсене пирĕн Украинăран кайала çавăрăнса пăхмасăр тухса тармала тунă. Шурă польаксĕмпе çапăçнă вăрçăра Дундич уйрăмах паларса тăнă.

Ийулĕн 4-мĕшĕнче Тимошенко дивизийĕ польаксен виççĕмĕш çурран тата пĕрремĕш утлă çар дивизисене сирсе пăрахса, Ровно хулине çавăрса илнĕ. Рыдз-Смиглы генерал çак районра çапăçма хăтланнă, анчах ĕç ăнман.

Ровно хулине çавăрса илнĕ хыççăн, Дундич хăйĕн полкипе польаксен тылне йышăннă, тăшмансене хĕвеланăç йенелле чакма чарнă. Çакнашкал йăвăр лару-тăрура кĕрсе ӳкнĕ шурă польаксем Александрийа районĕнче 4 çуран çар дивизи, утлă çарăн 8 полкне пуçтарнă. Вĕсем Дундич йулташăн паттăр полкне çине кашни кас тапăннă.

Хĕрӳлĕ çапăçусем пулнă. Польаксен пĕр ротине, пĕр ескадронне çеç мар çĕмĕрсе тăкнă Дундич полки. Польаксен вăйĕ вунă хут ытла пулнă пулин те, Дундич полки вĕсене çĕмĕрсе тухнă, кам ун çулне картлама хăтланнă, вăл вĕсене пурне те хайаррăн çĕмĕрсе тăкнă. Пирĕн боецсем паттăр кĕрешнĕ пирки шурă польаксем Случ шыв леш йенне каçса тарнă.

Ровно патĕнчи мухтавлă çапăçура Дундича, полк пуçĕнче тăнăскере, шурă польаксен пăшал пулли тивнĕ. Вăл револьуцин чăн-чăн паттăрĕсен мухтавлă вилĕмпе вилнĕ.

Иван Дундич—совет халăхĕн мухтавлă ывăлĕ, — Ленин — Сталин партин тивĕçлĕ воспитанникĕ. Вăл Ворошилов йертсе пынипе ĕçленĕ, вăл унран коммунисăм çентерĕвĕшĕн кĕрешме вĕреннĕ. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ Дундич йулташăн паттăр ĕçĕсене нихăçан та манас çук. Унăн пурнăçĕ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн боецĕсемпе командирĕсемшĕн питĕ паха пример пулса тăрат.

И. Тӳленев.

(„Красная звезда" хаçатран).

Академи театрĕнче

Февралĕн 14 мĕшĕнче

„ОТЕЛЛО"

Талон № 110

Автомашинăсен запас пайĕсем—

Ĕçре пулнисем хамăртан

ЫТЛАШШИ ПУР

Кивелнишĕн хакне чакарса сутатпăр.

Адрес: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 67.

ЧĂВАШАВТОГУЖТРЕСТ.

2—1

Сăра-квас хатĕрлекен Шупашкарти предприйати

Атăл çинчен пăр касса турттарма

февралĕн 20-мĕшĕнче

ТОРГИ ТĂВАТ

Торгире пулас текен колхозсен çак адреспе пымала:

Ленинградскайа 29. Сăра-квас предприйати кантурĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—3

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ

Шупашкарта, Тĕп дезостанци çумĕнче

ДЕЗИНФЕКТОРСЕН 3 УЙĂХЛĂХ КУРСНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕТ

Курса 7 çултан кайа мар вĕреннисене илеççĕ.

Курсантсене вальли общежити пур, тата стипенди параççĕ.

Курсра вĕренме районсенчи сывлăха сыхлав пайĕсем панă командировкăсем тăрăх пынисене çеç йышăнаççĕ.

Заньатисем кăçалхи февралĕн 20-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—3

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене каялла параççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 77 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 52—94 см. 1—1 п. л.

0